ХЫПАР

12+

АВӐН
9 № 2014

# САМАНТ



**_ВИА «Юрлакан чӗресем»:
Юрласан чун-чӗре –
тунсӑх пусмӗ сире!_**

# Патшасен патши



***Тăван халăх кун-çулĕн кĕрекинче аслă вырăн йышăнакан, тĕнче историне «Турă чăпăркки» ятпа кĕрсе юлнă Аттила (тĕрĕсрех – Аттил, Аттел) хăйĕн Бледа (Пĕлĕт) аслă тетĕшĕпе хăсан патшана ларни иккĕленÿсĕр паллă: 434 çулта. Вăл хăсан сарăмсăр вилнине вара иккĕлле калаççĕ: Аквитани Просперĕ тата «Галл хроникин 511-мĕш çулĕ» ăна 453 çулта вилнĕ тесе асăнаççĕ, Марцеллин Комит вара Аттила 454 çулта тĕнчерен кайнă тет. Патшасен патши хăçан çурални паллă мар. Ытларахăшĕн шухăшĕпе вăл 406 çулта тĕнчене килнĕ. Ячĕ ытла та чăвашла илтĕннĕрен ăна Атăл юхан шывĕпе тÿрремĕнех çыхăнтараççĕ. Чăннипе, Аттил ят мар – титул. Çĕр-шыв ашшĕ – атте ел – тенине пĕлтерет вăл. Урăхла каласан – император. Унăн ашшĕн ячĕ – Мундзук. Ят пуçламăшĕнчи «мун» уйрăм сăмах, «пысăк, мăн» тенине пĕлтерет. Ашшĕн тетĕшĕсем – Октар тата Рукил (Приск тепĕр тетĕшне те – Оиварсие – асăнать: Оивар). Хунн патшисен юн-ăратĕнче (династийĕнче) арçын ячĕсенче «ар» тата «ил» (е «ел») сыпăксем пулнăран çав ятсем титулсене пĕлтернĕ тесе шухăшлас килет.***

Кăçал Аттил (хăйĕн аслă тетĕшĕ Пĕлĕтпе пĕрле) патшана ларни 1580 çул çитрĕ, çут тĕнчерен уйрăлни 1560 çул тултарчĕ. «Хунсем (гунсем) пире сывăх халăх пулнă», – тесе çут тĕнчере паян чăвашсемсĕр пуçне тек никам та калаймасть. Венгри Республикине Magyarorszag тесе çеç мар, Hungaria ятпа та чĕнеççĕ пулин те чăн-чăн Хунгарипе – Хунсен империйĕпе – çыхăнман ку. Мадьяр-укăрсем Вăтам Дунай тÿремне IX ĕмĕрте çеç куçса пынă. Аттил патшан тĕп çурчĕ вара – паянхи географи чĕлхипе каласан – хальхи Венгри аслă тÿременче пулнă. Çавăнпа ĕнтĕ мадьярсене хун тесе каласси Хунгари еткерĕнчен юлнă ят çех. 440 çулта Аттила Вăтам Дунай çинчи Маргус хулин епископне хун патшисен вил тăприсене тустарнă тесе айăплать те юхан шыв патĕнчи Рим провинцийĕсене аркатса тухать. Кăшт каярах Дунайпа Тисса юхан шывĕсем тăрăхне туртса илет те кил-станне Паннонире никĕслет.

Кăçал Дунай урлă çĕнĕ кĕпер хывнă чухне Будапештра IV ĕмĕрте пытарнă гунн кил-тăприне (гробница) тупрĕç. Пуянлăхне кура кунта йăх ертÿçине пытарнă тесе шухăшлаççĕ археологсем. Вилнĕ çынна леш тĕнчене хĕç парса янăран хăшĕсем Аттилăн вил тăприйĕ тупăнчĕ иккен тесе те каларĕç. Метеорит тимĕрĕнчен туптанă пысăк хĕç чăнах та хун патшипе çыхăннă хавхана – Тенкри хĕçне аса илтерет. Европа литературинче ăна Марс (Арес) хĕçĕ теççĕ. Тенкри хĕçĕ мĕнле тупăнни çинчен Аттил патне кайнă Византи элчи Приск (Пани Прискĕ) çырса хăварнă.

Кĕтĕвĕнчи пĕр вăкăр уксахлама пуçланине асăрханă теменле кĕтÿçĕ. Çав янавар урине мĕнле амантнине пĕлес тесе хуçи юнлă йĕр тăрăх кайнă та çĕр айĕнчен хĕç тухса тăнине курнă. Курăк çисе çÿрекен вăкăр ăна асăрхаман та – урине кастарнă. Кĕтÿçĕ хĕçе чавса кăларнă та Аттил патне илсе пынă. Лешĕ питĕ савăннă çак хĕç тупăннăшăн – Тенкри (Танкăр) панă паллă тесе йышăннă.

Çак хĕç хунсен кил-станне Византи элчелĕхĕ çитес умĕн тупăннă пулать. Çав хĕçе çеçен хир патшисем питĕ сума сунă, ăна вăрçă туррине чысланă тесе хисепленĕ тет. Анчах авалхи вăхăтсенче вăл çухалнă пулать, халĕ вара ăна турă янаварĕ вăкăр тупнă. Аттил шухăшĕпе, турă перс халăхне, кайран ыттисене парăнтарма панă паллă ку. Хунсем çеç мар, Рим тата Византи çыннисем, ытти халăхсем те Марс хĕçне Аттилăна парса турă патшан хăватне тата ÿстерессе систернĕ тесе ĕненнĕ.

«Пĕтĕм гунсен тата Скифири йăхсен тĕнчери пĕртен пĕр ертÿçи тата хуçи, мĕн пур варварсем хушшинче юмахри пек мухтавлă пулнăран тĕлĕнтерекенскер», – тесе хаклать хун патшине Иордан. Аттил сăнарĕ германсен фольклорне кĕрсе юлнă, скандинавсен сагисене куçнă. Паян кунччен те Аттилăна пĕлмен çын çут тĕнчипе те çук.

Аттил патшана тетĕшĕпе пĕрле ларнишĕн нимĕн тĕлĕнмелли те çук: вăл вăхăтсенче кунашкалли тăтăшах пулнă. Пĕр патша халăх пурнăçне йĕркеленĕ, тепри вара çар-вăрçă ĕçне тытса пынă. Аттилăна çĕнтерме хăнăхнă, лайăх йĕркеленĕ, опытлă çар лекнĕ. Ашшĕн шăллĕ Рукил римлянсене нухрат (дань) тÿлеттерниех хунсен çарĕн хевтине палăртать. Аттилпа Пĕлĕт патшана ларсан вĕсем вĕçĕмсĕр походсем пуçланă. Вунă çул хушшинче хунсем хальхи Венгри, Греци, Испани, Итали çĕрĕсене тытса илнĕ. Пирĕн çул пуçсен вил тăприсене тустараççĕ тесе Аттилăпа Пĕлĕт 435 çулта Маргус хулине (халĕ – Позаревак) тапăнаççĕ. Артак (мир) килĕшĕвĕ тăрăх – византсен нухрата икĕ хут ытларах тÿлемелле (кашни çул ылтăнпа 317 килограмм). 435-439 çулсенче хунсем анăçра лăпланаççĕ, вĕсен çарĕсем çурçĕрте тата тухăçра ыттисенне пăхăнтараççĕ. Византи çакăнпа усă курса нухрат тÿлеме пăрахать. 441 çулта Аттил Византи империне кĕрсе каять, Виминациум (Костолак), Маргус, Сингидунум (Белград), Сирмиум (Метровика) тата ытти хулана аркатса тăкать. Тухăç Рим империйĕ хунсенчен артак – мир ыйтать. Чылай калаçу ирттерсе аран-аран мир тăваççĕ Тухăç Рим империйĕпе Хунн империйĕ. Тăвăл лăпланать, анчах Кĕçĕн Феодосий император нухрат тÿлеме, тарса кайнă çынсене тавăрса пама килĕшмест. 443 çулта Аттил Константинополь патнех çитет, Византи çарĕсене аркатса тăкать. Хунн патши 2600 кг ылтăнпа нухрат пама, кашни çулах тепĕр 900 кг ылтăн тÿлесе тăма хушать. Тухăç Рим килĕшет.

445 çулта Пĕлĕт сарăмсăр вилет. Нумай автор çакăншăн Аттила айăплă тесе çырать, Пĕлĕте Византи агенчĕсем вĕлернĕ тесе калани те пур. Вăрçă капкăнне лекнĕ Тухăç Рим империйĕ хунсен патшисене тĕп туса инкекрен хăтăласшăн пулни ĕненмеллерех паллах. II Феодосий (Кĕçĕнни) император хунсен хунă нухратпа килĕшмест. 447 çулта Аттила Византи империне аслă поход пуçлать. Марцеллин Комит çапла йышăнать: «Хăрушă вăрçăра, малтанхинчен самай йывăртараххинче, Аттила пур Европăна тенĕ пек тусан туса авăрса тухрĕ».

Византи Аттила патне элчелĕх янă. Çавăн чухне, 449 çулта, хунн патши станĕнче пулса курнă та ĕнтĕ Приск историк (Приск Панийски). Аттила пăхма мĕнлерех пулнине çырса хăвараканĕ шăпах вăл. Аттилăна сăнарлакан историксем Приск çырса хăварнисемпе усă курнă. «Çак çын халăхсен сехрине хăпартма тата пур тĕнчене те хăратса тăма çут тĕнчене килнĕ. Хăйĕн çинчен çўрекен сăмах-юмахпах вăл пурне те чĕтреттерсе тăнă. Мăн кăмăллăн утнă май вăл айккинелле пăхса илсен те унăн яка пĕвĕн кашни хусканăвĕ хăрушă пек туйăнать. Вăрçă вăрçма юратаканскер, Аттила апат-çимĕçпе иртĕнмен, ăс-тăнпа çирĕп пулнă, мĕн ыйтнине тивĕçтерме тăрăшнă, кам унран пулăшу-хўтĕлев ыйтнă – ăна пулăшнă. Çўллĕшпе пысăк мар, сарлака кăкăрлă, пысăк пуçлă, хĕсĕк куçлă, сайра сухалĕ тĕл-тĕл кăвакарнă, сăмси лаптакрах, ўчĕ хăмăр». Аттилăна хунсене паранна халăх ертўçисем çеç мар, ăна пăхăнса тăман патшасем те юратнине палăртаççĕ авалхи авторсем.

Хунсем йўркĕн халăх пулнă тесе калатпăр та вĕсем юртсенче те шатăрсенче çеç пурăннă тесе шутлатпăр. Аттилăна хăй куçĕпе курнă, хунсен патĕнче пулнă Приск вара урăхларах çырать. Хунсем ялсенче пурăннине калать, çул çўреври вĕсене пăрипе, пыл сăрипе, сăрапа сăйланине пĕлтерет. Пĕрре элчелĕх çил-тăвăла лекет. Çиçĕм çиçсе аçа çапса хăрушла çумăр çуни элчĕсене веçех хăратса ўкерет, вĕсем ăçта куç курать – çавăнта тараççĕ. Телее, пур çул-йĕр те çав тăрăхра хунсен ялне илсе пынă иккен. Пĕр-пĕрне кăшкăра-кăшкăра чĕннĕ рен вĕсем пĕтĕм яла вăратнă. Хунсем хăмăш çунчăксем чĕртсе урама сиксе тухнă. «Пирĕнпе пыракан варварсем çанталăка пула шар курнине каласа пачĕç. Ял çынсем пире хăйсем патне чĕнчĕç, килĕсене илсе кĕчĕç, вучахсене нумай хăмăш хурса пире ăшăтрĕç. Çак ял хуçи – вăл Пĕлĕтĕн (Аттил тетĕшĕн) арăмĕсенчен пĕри иккен – çимелли-ĕçмелли тата пирĕн кăмăла хăпартма хитре хĕрарăмсем ярса пачĕ. Çакă хисеп кăтартни шутланать. Эпир хĕрарăмсене апатшăн тав турăмăр, анчах тек вĕсемпе хутшăнмарăмăр. Эпир пўртсенче çĕр каçрăмăр, тул çутăлсан япаласене шырама кайрăмăр. Вĕсене пăрахса хăварнă çĕрте, кўлĕ хĕрринче, кўлĕре те тупрăмăр. Ăпăр-тапăра типĕтсе эпир кунĕпех ялта пултăмăр. Çанталăк лайăхланчĕ, хĕвел çиçме тытăнчĕ. Лашасемпе ытти выльăх-чĕрлĕхе пăхнă хыççăн патша майри патне кайрăмăр. Ăна саламларăмăр та виçĕ кĕмĕл чашăк, хĕрлĕ тĕспе сăрланă сăран, Инди пăрăçĕ, финик çырли тата ытти пылак çимĕç парнелерĕмĕр. Варварсен çĕрĕсем çинче ўсменрен çак çимĕçсене вĕсем питĕ хаклаççĕ. Пире тараватпулнăшăн патша арăмне ырлăх-сывлăх сунтăмăр».

«Темиçе çырма урлă каçсан эпир пысăк яла çитрĕмĕр, унта Аттила керменĕ ларать. Пире ĕнентернĕ тăрăх, çак кермен Аттил валли ытти вырăнсенче лартнă керменсенчен чи лайăххи. Ăна хитре касса кăларнă пĕренесемпе хăмасенчен хăпартнă, йĕри-тавра йывăç хўме. Хўмине вара такамран хўтĕленме мар, илемшĕн тытнă. Патша çурчĕ хыççăн чи лайăххи – Онигисий (Онигис, Онекес) пўрчĕ, ăна та йывăç хўмепе çавăрнă. Анчах унăн хўмине Аттилăнни пек турулсемпе (башньăсемпе) илемлетмен. Хўмерен инçех те мар мунча, ăна Аттила хыççăн скифсем хушшинче чи хăватлă Онигисий лартнă. Мунча тума вăл Пеон çĕрĕнчен ятарласа чул илсе килнĕ, мĕншĕн тесен варварсен çаканти çĕрĕнче вăрман та, чул та çук».

Кусса çўрекен, йўркĕн халăх йывăç пўртсемлĕ ялта пурăнать, çуртсем лартма таçтан аякран йывăç турттарать. Ăшши лайăх пултăр тесе мунча чулне те урăх çĕртен илсе килнĕ! Хăтлă-тĕплĕ пурнăç пырать. Апла эпир хунсене тĕрĕс мар хаклатпăр. Византи элчи Аттилăн Крека аслă арăмĕ патĕнче пулни те хунсен «йўркĕнлĕхне» пач урăхла кăтартать. «Карта леш енче нумай çурт ларать; пĕрисене касса эрешленĕ хăмасенчен хитрен çапса тунă, теприсене пĕр пек чутласа кăларнă пĕренесенчен лартнă, вĕсене урайĕнчен тытăнса çавăрса пураланă. Кунта Аттилăн арăмĕ пурăнать; алăк умĕнче тăракан варварсем мана шала иртттерсе ячĕç, эпĕ çемçе вырăн çинче выртакан Крека патне кĕтĕм. Урайне кĕççе кавирсем сарнă, вĕсем тăрăхах утса çўреççĕ. Патша арăмĕ тавра нумай тарçă тăратчĕ; ăна хирĕç урайĕнче ларакан хĕр-чурасем вара, тумтир çийĕн хитрелĕхшĕн тăхăнакан пусма пĕркенчĕкĕсен тĕсĕсемпе куçа йăмăхтарчĕç».

Тĕнчене кутăн çавăрса хунă Аттила тулăх пурнăçран, шучĕ çук пуянлăхран иртĕнсе кайнă ăшăх чун-кăмăллă çын пулман. «Ытти варварсемпе пирĕн валли питĕ тутлă апат-çимĕç хатĕрленĕ, ăна кĕмĕл савăтсемпе пачĕç; Аттила умне вара йывăç турилккепе какай çеç лартса панă. Пур енĕпе те сăпайлăх кăтартрĕ вăл. Ĕçкĕ-çикĕрисене ылтăн тата кĕмĕл чашăксемпе сăйларĕç, унăн чашăкĕ вара йывăçранччĕ. Тумтирĕ те унăн ахальли кăначчĕ, типтерлĕхĕсĕр пуçне нимĕнпе те уйрălса тăмастчĕ. Скифсем хушшинче йăлана кĕнĕ пек çакăнса тăракан хĕçне те, варвар пушмакĕсен кантрисене те, лашин йĕвенне те ылтăнпа, чулсемпе, ытти хаклă япалапа хитрелетмен», – çырса кăтартать Приск.

Элчелĕх хўттипе Аттилăна вĕлерес шухăш та каварланă Тухăç Рим империйĕ. Паллă çар пуçне Эдекона ылтăн парса çак хура ĕçе элчелĕх тăлмачин Вигилăн пурнăçламалла пулнă. Эдекон византсем мĕн шухăш тытнине хунн патшине каласа панă. Çапах та Вигил тăлмачăна вĕлерме хушман кавар пирки пĕлнĕ Аттила, çылăхне каçарттарма вара пысăк укça тўлеттернĕ.

Хунсене Византие тарнă çыннисене тавăрса пама, 6 пин литр ылтăн (2 тоннăна яхăн) тўлеме, малашне вара кашни çулах нухрат 2 пин те 100 литр ылтăнпа парса тăма килĕшет Тухăç Рим. «Çак вăрçă хыççăн римсене (византсене) хăрушла инкек-ниш килсе çапрĕ, нумайăшĕ выçăпа е чăтаймасăр çакăнса вилчĕç», – палăртать Приск.

Хунсен çарĕ мăн йăхсенчен йĕркеленнĕ. Аттила вăхăтĕнчи мăн йăх – кĕçĕн йăхсене тата ăрат-ăрусене пĕрлештерекен



50 пине яхăн çын темелле. Çак 50 пин çын пĕр чемен (тĕмен, тумен, 10 пинлĕ) çар тăратнă. Вăл вуннăллă йĕркерен тăнă: чи пĕчĕк пай – 10 юлан утçă. Хунн империне кĕрекен алансен те çар йĕрки çакнашкалах пулнă, герман йăхĕсем вара кăшт урăхларах тытăмпа пурăннă. Аттил çарĕнчи çуран çуйăçсем, тĕпрен илсен, германсем.

Хунн патши вăрçă ĕçне лайăх пĕлнине тата ăнланнине пурте йышăнаççĕ. Унăн кăрал чĕмне (боевой дух) нимĕнле тăшман та хуçайман. Патша кăмăлĕ вара ыттисене те витĕр витĕмленĕ. Аттил çапăçу хирне хăй тухниех çĕнтерӳ илсе килет тесе ĕненнĕ. Турă вырăнне пулнă вăл.

Паян кунччен йăнăш курăм хуçаланать çынсен ăс-тăнĕнче. Хунсене саранча пекех йышлă тесе шухăшлаççĕ темшĕн. Тĕрĕссипе вĕсем йышпа сахал пулни пирки пит шухăшламастпăр та. Чăннипе вара Аттил пур вăрçăра та йышпа хунсенчен нумайрах тăшманпа çапăçнă. Унăн çар таланчĕн тепĕр ырă енĕ – тытăçусене пĕчĕк çухатусемпе выляса илме пĕлни. Çавăнпа çар тактикинче хăвăрт рейдсем, çиçĕ мле тапăнусем, харăс чакни, вăрттăн çавăрса илни тăтăшах тĕл пулнă. Çапăçу хирĕнче пĕр мел тепĕр меслете куçнине тăшман ăнкарса та илеймен. 451 çулта Каталаун хирĕнче пулса иртнĕ халăхсен вăрçинче çеç Аттила тӳрĕ тытăçуран пăрăнман та çын нумай çухатнă.

Аттила империйĕнчи тĕп халăхсем – хунсем, алансем тата германсем (тухăç готсем). Хун çарĕнче çапăм вăйсем юлан утçă ухăçсенчен тăнă. Хунсен тата алансен (скифсен) лаша çинчен пеме меллĕ ухă пулнă (ăна хунн уххи теççĕ). Сиккипе пыракан лаша çинчен тĕле 100 метртан лектерме, икĕ çеккунтра пĕр çĕмрен пеме пултарнă юлан утçăсем. Ушкăнпа тапăнса кĕнĕ чух çуйăçсем ухăран 200 метра яхăнах пенĕ.

Çитес номерте «Самант» тусĕсене Аттилăпа çыхăннă юрату историне каласа парăпăр: «Халăхсен вăрçи» пуçланнă çав юрату пăтăрмахне пула, шырлансем юнпа тулса çырма пек юхнă!

**Менгу ТИМУР**

● **ЧЫС ТА МУХТАВ!**

# Тĕнчен тăвата кĕтессине пĕрлештерекен

***Тĕнчене кутăн çавăрса хунă хунсем чăваш халăх историйĕнче паллă вырăн йышăнаççĕ. Çакна тулли кăмăлпа йышăнма эпир хальлĕхе пиçсе те çитмен-ха. Европа анлăшĕсене тухиччен пирĕн несĕлсем сюнну (усал тискерĕç – хаяр варвар) ятпа Китай империне хăратса тăнă. Чăвашсен аваллăхне уçса паракансенчен пĕри – тĕнчипе паллă синолог, Чăваш Енĕн чысĕ те мухтавĕ Никита Яковлевич Бичурин, манахлăхра – Иакинф атте. Авăн уйăхĕн 9-мĕшĕнче вăл çуралнăранпа 237 çул çитрĕ. Кӳкеç поселокĕнчи «Н.Я.Бичурин тата хальхи самана» музей çак паллă куна асăнса «Бичурин вулавĕсем» ирттерчĕ. Вулав паллă ăсчахсене, студентсене, шкул ачисене те пĕрлештерет.***

«Н.Я.Бичурин тата хальхи самана» музей – Шупашкар районĕн ахах-мерченĕ. Пĕтĕм Раççейри ăмăрту-тупăшура та палăрнă вăл. Чăваш халăх культурине кăтартас, палăртас, аталантарас пархатарлă та яваплă ĕçре унăн авторитечĕ питĕ пысăк. Ӳнер ал ĕçĕсен «Паха тĕрĕ» фирмипе пĕрле Атăлçи тăрăхĕн пултарулăх конкурсĕсене йĕркелесе ирттерни мĕне тăрать! Никита Бичурин çуралнă кунĕ тĕлне музейпа парк комплексĕнче чул сарнă сукмаксен тĕрри анлăланнă, синолог палăкĕпе юнашар паркра Китай çитти (беседка) ӳссе ларнă. Çак курăмлă та илемлĕ ĕçе пурнăçлаканĕ «Чувашагроинвестстрой» акционерсен хупă обществи. Общество директорне Валерий Гурьевич Борисова «Н.Я.Бичурин тата хальхи самана» музей патриочĕ тесех хакламалла.

«Бичурин вулавĕсенчи» нумай тĕпчев ăс-тăна кăсăклăхĕпе тыткăнларĕ. Чăнах та, Никита Бичурин тесенех пурнăç вĕреме тытăнать, тĕнчен тăвата кĕтессине пĕрлештерсе тăрать ăсчах манах. Çапах та чи интереслĕ докладсенчен пĕри филологи наукисен докторĕн Николай Иванович Егоровăн «Китай историйĕнчи огур йăхĕсем (Çурçĕрти пилĕк йăхăн вун ултă патшалăхĕн тапхăрĕ)» пулчĕ. «Китай культурине тата Китай этеммин чунне уçса пама мехел çитернĕрен Иакинф атте ăсчах паттăрĕ тенине хăнăхнă эпир. Никита Яковлевич пире чăваш халăхĕн историне уçса панă пирки вара пит шухăшласах та каймастпăр. Унăн тĕпчевĕсене-куçарăвĕсене пула эпир несĕлсен кун-çулне пирĕн эрăчченхи саманасенченех пĕлетпĕр. Хамăра Китай историйĕнче сюнну ятпа тăрса юлнă хăватлă халăх тăхăмĕсем тесе тивĕçлипех шутлама пултаратпăр», – çак шухăшсене истори факчĕсемпе çирĕплетрĕ Николай Иванович.

Юнпа Иакинф атте – чăваш. Сăмахпа сăнарланисем, унăн портречĕсем çакна çирĕплетеççĕ. Ватлăх çитнĕçем Иакинф атте «китайлансах» пынине те палăртнă унăн пĕлĕшĕсем. Чăваш историкĕсем те аванах кăсăкланнă çак ыйтупа. Иакинф атте хăйĕн ачалăхĕ-яшлăхĕ, ашшĕамăшĕ, тăванĕсем, пĕлĕшĕсем, тусĕсем пирки аса илме, каласа пама пит юратман. Никита Яковлевичăн амăшĕ вырăс, ашшĕ вара чăваш пулни паллă. Анчах чăвашран тухнă тĕн çыннисем вăл вăхăтра хăйсене нихăçан та чăваш – инородец – тесе кăтартман.

Синологăн еткерне тĕпченĕ Л.Н.Гумилевпа М.Ф.Хван паллă ăсчахсем те Никита Яковлевич çырăвĕсене тишкернĕ чух лешĕ чăваш чĕлхине аван пĕлнине палăртнă.

**В.СТЕПАНОВ**



# УЛĂП

Андриян Григорьевич Николаев çуралнăранпа авăнăн 5-мĕшĕнче 85 çул çитрĕ. Чăвашсен наци ăс-чун курăмне пĕр кунтах – 1962 çулхи çурлан 11-мĕшĕнче – тĕнче шайне хăпартнă космос паттăрĕ тăван халăх историйĕнче унччен пулман: вăл – пĕртен-пĕрре. Çурлан 15-мĕшĕнче Андриян Григорьевич орбитăран таврăнсан чăваш халăхĕ те хăйне Çĕр-анне çине Хур кайăк çулĕпе çăлтăр уçлăхĕнчен вĕçсе килнĕ пекех туйнă. Пĕр кун пин çулпа танлашнă темелле.

Хур кайăк çулĕн пĕрремĕш чарăнăвне те – Уйăх çине – чутах çитмен пирĕн Андриян: 1965-1969 çулсенче уйăх çине кайма хатĕрленекен космонавтсен отрядĕнче пулнă. Уйăх вĕçевĕн программипе килĕшӳллĕн, вăл – экипаж командирĕ шутланнă.

Космоса тĕпчес ĕçри ăнăçу-çитĕнӳшĕн Андриян Григорьевич 1984 çулта СССР Патшалăх премине тивĕçнĕ. Уйăхăн тӳнтер енĕнчи пĕр картера пирĕн паттăр ентеш ятне панă. 2004 çулта Раççей космонавтикин федерацийĕ А.Г.Николаев медальне çирĕплетнĕ. Шуршăлти музей – Раççейри космонавтика музейĕсенчен чи аслисенчен пĕри – 1972 çулта уçăлнă вăл (малтан шкулти космонавтика

Андриян Григорьевичăн тăван ялĕ паян Космонавтика музейĕпе, уçлăх улăпĕн мавзолейĕпе мухтавлă. Этемлĕх историйĕн ылтăн кĕнекине кĕрсе юлнă чăваш паттăрĕ Шуршăлта ĕмĕрлĕх канăç тупнăранпа Çавал сăрчĕ çинче ларакан ял улăп тăвĕн кăшăлĕ пекех курăнать.

Шкул ачи чухне Шуршăла экскурсие кайни халĕ те асра. Космонавтика музейĕ ун чухне кивĕ çуртра. Эскурсовод: «Шуршăл ялĕн ячĕ мĕне пĕлтерет?» – тесе ыйту пачĕ. Шуршăл – ШурăЎÇутă çăла пĕлтернине пĕлмен чăваш ачи вăл вăхăтра çут тĕнчипе те çук. Хорпа харăс хуравларăмăр. «Çавала тухакан таса çăлсене курас, шывне ĕçсе пăхас килет-и?» – ыйтрĕ каллех музей ĕçченĕ. «Килет! Килет!» – сурăх путеккисем пек сиккелетпĕр эпир.



Экскурсовод пире Çавал хĕрне илсе кайрĕ, сукмакпа карталанса эпир тапса тăракан çăлсем патне антăмăр. Андриян Григорьевича космонавт пулма пулăшнă сиплĕ те асамлă шыва тутанса пăхрăмăр.

Çавал хĕрринче пурăнман, тапса тăракан çăл куçсенчен тутлă шыв ĕçмен пулсан пирĕн Андриян космонавта тухас та, тĕнче уçлăхне хăпарас та çукчĕ пекех туйăнчĕ пире пурне те. Ача-пăча логики ансат: акă пирĕн ял çумĕпе Çавал юхса иртмест, шурă çăлсем тапса тăмаççĕ те çавăнпа никам та пирĕн ялтан космонавта тухайман!

Хăш вăхăтра Çавал юхан шывĕ Атăлтан та аслăрах пулса тăчĕ. Юмах тĕнчинчен, улăпсен çĕр-шывĕнчен юхса килнĕнех туйăнчĕ пире. Питĕ анлăн курăнчĕ çырма, унăн сулахай çыранĕ таçта инçетре пек. Çакнашкал туйăмсен тыткăнĕнче пулса куртăмăр эпир Шуршăлта. Каялла сăрта хăпартăмăр та – космоса илсе каякан пусман картлашки çинче тăнăнах туйăнчĕ. Пирĕн ачалăхра тĕнче уçлăхĕ Шуршăлтан пуçланатчĕ.

**В.СТЕПАНОВ**

# УÇЛĂХ ПАТТĂРĔН ХАВХАЛАНТАРĂВĔ

Хаяр вăрçă иртсе кайни 16 çул иртнĕ пулин те пурнăç уралансах çитейменччĕ-ха. Уйрăмах ялсенче çакă вăйлă сисĕнетчĕ. Ача-пăчана та çăмăлах пулман. Колхоз ĕçĕнче тертленме тивнĕ. Тăхăнмалли тупса туянма та кансĕрччĕ. Шкулта вара  чаплă пурнăçа мухтакан юрă-сăвă янăраттаратчĕç. Çапах ачалăха ӳпкевĕм çук манăн. Пурте пĕр шайра пурăннă, çавăнпа чухăнлăхпа пуянлăха туйман. Тепĕр тесен ĕçре пиçĕхсе ӳсни мĕне тăрать! Уй-хирте ушкăнпа туслăн тăрăшнă, пĕр-пĕрне пулăшнă. Хаваслă самантсем те пулман мар. Ю.А.Гагарин уçлăха тĕнчере чи малтан çĕкленни – уявсен уявĕ! 5-мĕш класра вĕренекен ачан чăтма халĕ çитеймерĕ – халалласа сăвă çыртăм, класри стена хаçатне сĕнтĕм. Кăлармарĕ пĕр вĕрентекен: ялти интеллигенци çемйинчи икĕ ачан «хайлавĕсем» тухрĕç. Çакă кăмăла хуçрĕ курăнать. 1962 çулта Андриян Григорьевич Николаев космоса вĕçсен епле хавхалантăм! Аллăмсем тӳрех хутпа кăранташ енне туртăнчĕç. Унтанпа вара çырма пăрахман.

Андриян Григорьевич чăвашшăн çав тери пысăк ĕç тунă, унăн чунне çунатлантарнă. Ахальтен мар чылай çемьере ывăлĕсене Андриян ят панă. Чăваш тесе çыртаракансем сасартăк ӳссе кайнă.

А.Г.Николаев тăван республикăшăн яланах тăрăшнă, ентешĕсене пулăшнă.

Хăй вăхăтĕнче комсомол обкомĕн 1-мĕш секретарĕ пулнă Л.Я.Тянговпа калаçса ларма тивнĕччĕ мана. Вăл космонавтăн çывăх юлташĕсенчен пĕри пулнă. Çакна каласа кăтартрĕ: кама та пулин ура хурас тĕллевпе ун патне пыракансем пурри ăна хытă пăшăрхантарнă. Чăваш халăхне туслă пурăнтарас килнĕ унăн.

«Алтăр Çăлтăр» сăввăмра та чаплă космонавтăн халалĕ сире сисĕнессе шанатăп.

# АЛТĂР ÇĂЛТĂР

*Уçлăх паттăрне – А. Г.Николаева*

## Ĕмĕт

Чăвашсен чи мăн аслашшĕ –
Улăп тенĕ сĕм авал.
Ун çинчен халап ăслаççĕ,
Çĕкленсен чунра хавал:

Урине çав çын силленĕ
Тăпраран сăртсем-тусем
Пĕлĕте çити çĕкленнĕ,
Ларнă-мĕн ӳсе-ӳсе.

Улăп пулнă вăй-хăватлă,
Пуçĕ лекнĕ тӳпене.
Ух, çӳле çакса хăварнă
Хăйĕн чаплă куркине.

Халь те Алтăр Çăлтăр теççĕ
Юратса ăна кунта.
Эх, курма пĕрре çитесчĕ,
Юлнă пуль темскер унта.

Улăпăн хастар тăванĕ
Вĕçрĕ вĕççĕр космоса.
Тен, тепри илсе те анĕ
Уçлăхран шерпет ăсса.

*1962, 1972.*

## Асамлă мул

Вĕçсĕр-хĕрсĕр ырă ĕмĕт
Пуянлаттăр ăс-тăна.
Чап-мухтав вăл
ĕмĕр-ĕмĕр –
Пирĕн паттăр космонавт.

Ун вĕçевĕ – чун апачĕ
Пулчĕ тăчĕ халăхра.
Вăй-хăват асамлăн пачĕ,
Шухăш-туйăм – лайăхрах.

Тупăнчĕ апла чăвашшăн
Юмахри шерпет-сипет.
Ырă ĕç нумай тăвасшăн
Ачаран чĕре сикет.

Пĕр-пĕрне эпир сунатпăр
Ас тивме çав сипете.
Тав Турра, чунсем çунатлă,
Çутнă çивĕч ĕмĕте.

Улăп мулĕ –
Алтăр Çăлтăр...
Ăс унпа, тен, ăсмалла:
Нишлĕхрен пире вăл çăлтăр
Илĕртсе малтан мала.

*2012.*

## Чĕнӳ

Атăл хĕрринче кашланă
Ĕмĕрхи капмар юман.
Тăтăшах унта хутланă
Пĕр ача çара уран.

Вăл кунта килсе иленнĕ
Алтăр Çăлтăр каçхине
Илĕртӳллĕ те илемлĕ
Йăлтăр-йăлтăр çиçнине.

Чунĕнче йăл илнĕ шанăç,
Кăмăл вĕçнĕ кайăкла.
Ун чухнех паман-тăр канăç
Авалхи хитре йăла:

Алтăр йĕркипе тыттарнă
Хăй хăнисене чăваш.
Çакăнта чипер ытарлăх
Пулнине сума сăвас.

Туслăхшăн –
сăваплă ăсшăн –
Сиплĕ сим пек чĕнĕвне
Услăхăн хастарĕ ăшшăн
Çĕклесе-çке тӳпене!

*2014.*

**Василий**
**КОШКИН-КЕРВЕН**

# ÇУХАЛСА КАЙМАН



1969 çулхи кăрлачăн 22-мĕшĕнче КПСС Генеральнăй секретарĕ Л.Брежнев «Союз-4» тата «Союз-5» космос карапĕсен экипажĕсемпе, ытти космонавтсемпе тĕл пулма палăртнă. 14 сехет иртсен Кремле правительство кортежĕ çитнĕ. Милици сержанчĕн тумне тăхăннă Совет Çарĕн кĕçĕн лейтенанчĕ В.Ильин çанăсенче пытарнă икĕ пистолетран кортеж пуçĕнчен иккĕмĕш автомобиле пеме тытăннă: 6 çеккунтра 11 пуля кăларса янă. Леонид Ильич малти машинăра ларса çӳреме юратманнине пĕлнĕ террорист. Анчах хальхинче иккĕмĕш машинăра генеральнăй секретарь пулман. ЗиЛ-11Г автомобильте А.Николаев, В.Терешкова, А.Леонов, тата Г.Береговой космонавтсем пынă. Георгий Береговой малта, Илья Жарков водительпе юнашар ларнă. Сăнран вара космонавт Леонид Ильича аса илтернĕ. Çавăнпа Виктор Ильин Брежнев ларса пыракан машинăна перетĕп тесе шухăшланă.

Террорист пульли водителе вилмеллех амантнă. Ун хыçĕнче ларса пыракан Андриян Григорьевич çухалса-аптраса кайман. Руле ярса тытнă, автомобиле чарнă. Космонавтсем вăхăтра пĕшкĕнсе ĕлкĕрнĕрен вĕсене хăрушши нимĕн те пулман. Георгий Береговая кантăк ванчăкĕ кăштах амантнă, пирĕн ентеше пуля çурăмĕнчен шăйăрса иртнĕ.

***Сăн ӳкерчĕкре: хисеплĕ хăнасем Андриян Григорьевич ячĕпе хисепленсе тăракан Шупашкарти 10-мĕш шкулта***

**• АЙХИ: 80**

# Айхи кунĕ

***Мĕнле улшăнать пурнăç тата этем тĕнчи! Нумаях пулмасть кăна литература çĕр-шыв аталанăвĕн кăтартăвĕ шутланнă. Паян вара мĕн тума кирлĕ сăвă-калав? Çамрăксем кĕнеке пит вуласшăнах мар. Вулас тесен те çăмăл детектив таврашĕ уçкаласа пăхасшăн. Литература халăх философийĕн аталанăвĕ, малашлăх тĕнчевĕ, этем чунĕн аталанăвĕн «диагнозĕ» шутланнă тесен нумай çамрăк тĕлĕннипе вилсе выртма пултарать (чăн сăмахăн суйи çук!).***



Патăрьел районĕнчи Çĕньялта çуралса ӳснĕ Чăваш халăх поэчĕ Геннадий Айхи йндейсен делавар халăхĕн могикан йăхĕнчен тухман пулин те, поэтăмăр пирки куç мăчлаттармасăр «чăваш могиканĕсенчен юлашки» теме пулать. Чăваш халăх культурин элчи вырăнĕнче тăнă Геннадий Николаевич сăмахне влаç та итленĕ, шута та илнĕ. Поэт терменĕ халăх ячĕпе калаçма хевтеллĕ пулнă. Тĕнче калибрлă поэт çеç мар, халăх стратегиллĕ çыравçăччĕ Айхи. Унăн сăввисем 52 чĕлхепе пичетленнĕ, 36 çĕр-шывра кĕнекепе тухнă.

Çурлан 21-мĕшĕнче Геннадий Николаевич çуралнăранпа 80 çул çитрĕ. Çак чаплă датăна кĕреки темиçе тĕпеле чăмăртарĕ. Асăнса чыслани, паллах, поэт тăван çĕр-шывĕн-

че пуçланчĕ. Поэта асăнма Шупашкартан килнисене Çĕньял тăрăхĕн чиккинче çăкăр-тăварпа, кăпăклă сăрапа кĕтсе илчĕç. Çакăн хыççăн юбилей кортежĕ Çĕньял масарĕ çине çул тытрĕ. Геннадий Николаевичăн кунĕ асăну митингĕнчен тытăнчĕ. Ăна культура министрĕ Вадим Ефимов ертсе пычĕ. Пичет министрĕ Валентина Андреева вара Айхин халь çеç пичетленсе тухнă «Çырнисен пухиин» 3-мĕш томне поэтăн çывăх çыннисене парнелерĕ.

Çĕньял тăрăхĕн янравлă чĕрĕ сасси – Владимир Антонов ертсе пыракан «Илем» фольклор халăх ансамблĕ. «Илемсем», хастар шкул ачисем Геннадий Айхи ячĕпе хисепленкен пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан





шкулта хăнасене концертпа савăнтарчĕç. «Вĕç-вĕç, куккук» юрă вара реквием вырăнĕнчех янăрарĕ – поэтăн чи юратнă юрри пулнă вăл.

Айхине чыслама аякран килнисенчен Эурад Пустынина уйрăмăн асăнмалла. Геннадий Николаевичпа вăл 1989 çулта Мускавра, Марина Цветаева каçĕнче туслашнă. Çĕньяла вара Краснодар крайĕнчи Темрюкск районĕнчи Старотитаровск станцинчен «автостоп» меслечĕпе çитнĕ. Марофон чупакан Эдуард поэтăмăра асăнса Геннадий Николаевичăн кĕнекине аллине тытса Патăрьелне чупса кайса килнĕ. Çав кĕнекене вăл шкулти Айги музейне парнелерĕ. Тусĕн вил тăпри патне кайсан масар çинчех çĕр каçнă Эдуард. Çакнашкал сăвă çуралнă унăн чĕринче:

Лес... Пасутся лошади, поза...
И поет нам птица.
Вот могила друга. В творчество
все вновь превратится.
Что еще мне здесь – сказать –
– и светится радость солнца –
Может, песня новая его
Вдруг во мне проснется.

Геннадий Айхин юбилей кĕрекин тепĕр тĕпелĕ – Патăрьелĕнчи тĕп вулавăш. «Литература сехечĕ» конференци-тĕл пулăвăн чи сĕтеклĕ саманчĕсем – поэта çывăх пĕлнĕ Леонид Лялькин, Екатерина Юлдашева аса илĕвĕсем пулчĕç. Людмила Сорокина, Галина Хлебникова Айхине халалланă сăввисене вуласа парсан Валерий Салмин таврa пĕлӳçĕ юра шăрантарса ячĕ.

Геннадий Айхи çуралнăранпа 80 çул çитнине асăнса А» сасăн пĕтĕм тĕнчери кунне паллă турĕç. Атнер Хусанкай, Иосиф Дмитриев, Олег Улангин, Дмитрий




Воробьев тăрăшнипе йышлав (акци) Атăлçи хулисенче, Мускавра, Питĕрте, Парижра, Стокгольмра, Нью-Йоркра иртрĕ. Чăваш Енре ăна Çĕнĕ Шупашкарти библиотека ĕçченĕсем пуçларĕç. Каçпа 6 сехетре «А» сасăн кунне ирттерме айхиçсем Наци библиотеки лаптамĕнче пуçтарăнчĕç. «А» сасăна каласа-кăшкăрса-юрласа кăтартнисĕр пуçне, ăна хитрен ӳкерсе пама та тăрăшрĕç сасă уявне-поэт юбилейне хутшăнакансем.

**В.СТЕПАНОВ**

# Александр Пушкин тата чӑваш пики Улькка

***Чӑваш историне Александр Сергеевич Пушкин 1824 ҫулта кӗрсе вырнаҫнӑ темелле. Ҫав ҫул ҫӗртмен 7-мӗшӗнче вӑл Одессӑран П.Вяземский патне ҫыру ҫырать. «Паян санӑн арӑму ҫитрӗ, санӑн ҫырӑвусене тата Василий Львович мадригалне илсе килчӗ. Унта вӑл эсӗ хӳхӗм княгиньӑпа пурӑнӑн тет; ан ӗнен ӑна, чунӑм, ан та кӗвӗҫ. Ҫырӑвусем мана нумай тӗлӗшрен савӑнтарчӗҫ, хӑвӑн эпиграмму хыҫҫӑн эсӗ лӑплантӑн пулас. Тахҫанах ҫапла пулмаллаччӗ! Пирӗн, чӑвашсен, критика ҫук, патак ҫӗклени темӗн сипетсӗр; ҫапӑҫма чӗнни ҫинчен шухӑш тытни вара – кулӑш та, ҫылӑх та: цып-цып е цыц-цыц вара пач урӑх ӗҫ. Грибоедов эпиграммине ярса пар-ха мана...» (Жена твоя приехала сегодня, привезла мне твои письма и мадригал Василия Львовича, в котором он мне говорит, ты будешь жить с княгинею прелестной; не верь ему, душа моя, и не ревнуй. Письма твои обрадовали меня по многим отношениям, кажется ты успокоился после своей эпиграммы. Давно бы так! Критики у нас, чувашей, не существует, палки как-то неприличны; о поединке и смех и грех было и думать, то ли дело цып-цып или цыц-цыц. Пришли мне эпиграмму Грибоедова...)***

Пушкинпа Вяземскийе «чӑвашлатнӑ» паллӑ ҫыруччен маларах та чӑвашсене асӑнни пур аслӑ поэтӑн. 1920 ҫулта ҫырнӑ «Эпӗ вырӑс театрӗ ҫинчен асӑрхаттарнисем» статьинче Александр Сергеевич чӑваш хӗрне асӑнать: «Эхер ыттисем пирки калаҫас тесен малтан хӑвӑн пирки калаҫмалла-и? Карамзинӑн «Историне» критиклекен ятсӑрка валли Лужническ пустынникӗн кивӗ маски кирлех-ши? Нимӗҫ хӗрӗ Леонорӑна Шотланди хӗр-упраҫӗ Людмилӑпа е чӑваш пики Ольгӑпа танлаштарас тесен Чухонь ялне пытанмаллах-ши?»

(Должно ли сперва поговорить о себе, если захочешь поговорить о других? Нужна ли старая маска Лужнического пустынника для безымянного критика «Истории» Карамзина? Должно ли укрываться в чухонскую деревню, дабы сравнивать немку Леонору с шотландкой Людмилой и чувашкой Ольгою?)

Чӑваш пики Улькка историйӗ ҫакнашкал. 1816 ҫулта Павел Катенинӑн «Ольга» балладди пичетленнӗ. Ку хайлав Г.Бюргерӑн «Леонора» балладин ирӗклӗ куҫарӑвӗ. Леонора – каччине Австрипе Прусси вӑрҫинчен (1741-1748) кӗтсе илеймен нимӗҫ пики. Ҫак балладӑнах В.Жуковский те «Людмила» ятпа куҫарнӑ пулнӑ. Людмила хӑйӗн каччине Раҫҫейпе Ливони вӑрҫинчен (XVI-XVII ӗмӗрсем) кӗтсе илеймест. Катенинӑн балладинчи Ольга вара савнине Раҫҫей-Швеци вӑрҫинчи Полтава ҫапӑҫӑвӗнче ҫухатать.

Ҫакна та асӑрхаттармалла. Лужническ пустынникӗ (е Лужницки старецӗ) – Лужницк Слободинче пурӑннӑ М.Т.Каченовскин хушма ячӗ. Чухонь ялӗнче пытанмалла тесе поэт Н.И.Гнедич пирки калать. Лешӗ «Сын Отечества» журналта «Людмила» балладӑна критикленӗ, ятне вара кӑтартман, автор Питӗр кӗпӗрнинчи Тентелев ялӗнче пурӑнать тесе кӑтартнӑ. Чухонсем тесе вӑл вӑхӑтра финсене тата фин-угор халӑхӗсене каланӑ.

Павел Катенин – сӑвӑҫ, тӑлмач, нумай чӗлхе пӗлекен, критик, наука академийӗн ӗҫтешӗ. 1812 ҫулхи Тӑван ҫӗр-шыв вӑрҫине хутшӑннӑскер вырӑс ҫарӗн чикӗ леш енчи походӗнче те пулнӑ.

Ҫак ҫырӑвсем Александр Пушкин чӑвашсем ҫинчен чипер-аванах чухланине кӑтартаҫҫӗ. Паллах, поэт хӑйсен ӑратнин кун-ҫулне лайӑх пӗлнӗ, унӑн несӗлӗ Тимофей Семенович 1618 ҫулта Ҫӗрпӳ вӑйпучӗ пулнӑ. Ҫавӑнпа поэт чӑвашсене пӗлнинчен тӗлӗнмелли ҫук.

Николай Карамзин историкрен те илтнӗ Патша Салинче вӗреннӗ лицеист Пушкин чӑвашсем ҫинчен. Николай Михайлович ҫемьине тӑтӑшах кӗрсе ҫӳренӗ вӑл.

1826 ҫулта Иакинф атте пуҫ янинчен хӑтӑлса Питӗрти чаплӑ ҫынсемпе паллашсан Никита Бичурин Пушкинпа туслашнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн «ентешӗсем» – чӑвашсем – ҫинчен тата лайӑхрах пӗлекен пулнӑ поэт. Дмитрий Ознобишин ҫырӑвӗсенче те вуланӑ вӑл чӑвашсем ҫинчен.

«История села Горюхина» сатира-повӗҫе вӗҫлесен 1831 ҫулта Александр Пушкин «Аслӑ Петӗр патша тата унӑн – III Петӗр государь таранхи тӑхӑмӗсен кун-ҫулӗ» хайлава ҫырас кӑмӑл пур тесе архивсенчи хутсемпе паллашма ирӗк ыйтать. 1832 ҫулта поэт «Дубровский» роман ҫырма пуҫлать. Хресченсемпе улпутсен хутшӑнӑвӗ-ҫыхӑнӑвӗ, хирӗҫ тӑрӑвӗ кӑсӑклантарма тытӑнать поэта. 1830-1831 ҫулсенче Питӗрте тата Раҫҫей кӗпӗрнисенче халера пӑлхавӗсем, Новгородпа Старая Руссӑри ҫар лартӑкӗсенчи (поселенийӗсем) хирӗҫӳсем те халӑх кӑмӑлсӑрлӑхӗн кӑварӗ амалансах тӑнине систереҫҫӗ. Александр Сергеевич III Петӗр государь ятне йышӑннӑ Е.Пугачев шӑпипе интересленсе кайнинчен тӗлӗнмелли ҫук ҫавӑнпа. Хресчен вӑрҫипе ҫыхӑннӑ документсене вуланӑ май Пугачев вӑрҫи ҫинчен хайлав ҫырма шут тытать вӑл. Архив материалӗсемпе паллашни кӑна ҫителӗксӗррине туйса илсен пӑлхав куртамҫисемпе (свидетелӗсемпе) тӗл пулса калаҫма тӗв тӑвать, I Микулай патшаран Хусан тата Оренбург кӗпӗрнисене ҫитсе килме ирӗк ыйтать. 1833 ҫулхи ҫурла уйӑхӗн 17-мӗшӗнче поэт ҫула тухать. Ҫак ҫул ҫӳревре пулнӑ та ӗнтӗ Александр Сергеевич чӑвашсем пурӑнакан тӑрӑхсенче – критика мӗнне пачах пӗлмен «ентешӗсем патӗнче. Аслӑ поэт Чӑваш Ен тӑрӑхӗнче пулнине сӑнарласси – чӑваш ӳнерӗн мешехи тесех каламалла. Н.Сверчковӑн «Пушкин чӑваш ялне килни» тата Н.Овчинниковӑн «Ҫӑл куҫ патӗнче» картинисем чи паллисем шутланаҫҫӗ.





Хальхи Чăваш Енре поэт ăçта чарăнни, ăçта çĕр каçни пирки тĕпчевçĕсен пĕр шухăш çук – тĕрлĕрен калаççĕ. Мĕнле çулпа пыни вара паллă. Питĕртен Твере, унтан – Мускава. Мускавран Оренбург тата Уральск хулисене кайнă. Владимир, Чулхула, Шупашкар, Сĕве, Хусан, Чĕмпĕр урлă ям (çам, почта) çулĕ выртнă. Ăна вырăнти халăх хывнă, юсаса пăхса тăнă. Ям тытăмне Ылтăн Урта вăхăтĕнчех йĕркеленĕ, аслă çулсен тăршшĕпех – 40-50 çухрăмран – ям (çам, почта) станĕсем лартнă. Ям станцийĕсене чарăнмалли кил карти (постоялый двор), килекенсен çурчĕ (дом приезжих) тесе каланă. Станци хуçине вара пăхаканни (смотритель) тенĕ. Çам станĕнче килен-каян канма пултарнă, лашисене улăштарнă. Чăваш Ен тăрăхĕнче чи паллă ям станĕсем Станьялта тата Ĕсмелте (Октябрьски) пулнă.

Хальхилле каласан, çул çӳреве тухнă Александр Сергеевич Етĕрне, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка районĕсем витĕр пынă, Сĕве хулине Кĕçĕн Сĕнтĕр (Станьял) – Шупашкар – Юртукасси (Ердово, Пихчурино) – Ĕсмел – Карач – Тĕрлемес маршрутпа кайнă.

Чулхулана Александр Сергеевич авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче çитнĕ. Унтан тухсан Васильсурскра, Станьялта çĕр каçнă, авăнăн 4-мĕшĕнче поэт Шупашкара çитнĕ. Çам станĕ Успени урамĕнче, хула варринчех вырнаçнă пулнă (кайран çак урама Роза Люксембург ятне панă, халĕ – Шупашкар кӳлмекĕн лапамĕ): хальхи Наци музейĕ патнерех, Шупашкар (Чебоксарка) çырми хĕрринче ларнă. Шупашкарăн вăл вăхăтри тăватă пысăк урамĕпе – Собор, Благовещенск, Староблаговещенск, Верхнебасурманск тата Нижнебасурманск кассисемпе кайнă. Хальхилле – К.Иванов, К.Маркс, Ленинград, Урицкий урамĕсемпе пынă. Нижнебасурманск урамĕ вара паян çук – кӳлмек тĕпне юлнă.

Шупашкарта чарăнсан Александр Сергеевич хулапа тĕплĕнрех паллашать: Введенск соборне кĕрет, Атăл хĕрне тухса курать, пасара та çитет, çынсемпе калаçать. Пĕр 4 сехете яхăн пулнă теççĕ аслă поэт Шупашкарта. Малалла ăна Якку ятлă ямшăк кӳмепе лартса кайнă тет.

Александр Сергеевича Юртукассинчи ям хуçи каласа кăтартнă историне нумайăшĕ пĕлеççĕ. Ункă юхан шывĕ хĕррине лартнă утă купи патĕнче Пугачева темле йытă çулăхнă тет. Купа ăшне чакаланса пытаннă анчăка тытма тăрсан утă ăшĕнче улпутăн икĕ хĕрĕ тупăннă пулать.

Пушкин çул çӳревĕпе çыхăннă чăваш легендисем уйрăмах «сĕтеклĕ». Вĕсем халăх ăсĕнче кайран хывăннă, Раççей тата тĕнче культурин улăпĕ чăваш çĕр-шывĕнче те пулса курнине фольклор чĕлхипе ытарлаççĕ. Аса илер-ха çак хавхасене.

Сĕвене çул тытнă Александр Сергеевич Анаткас, Туçи, Тосинкасси витĕр тухнă. Урай ялĕ патĕнчи кĕпере вара шалкăм çумăр ишнĕ пулнă тет. Поэт ларса пыракан кӳмене çырма урлă каçарма икĕ чăваш кĕтӳçи пулăшнă. Вĕсенчен пĕри майĕнчен темĕнле шăхлич çакса янă. «Мĕн ку?» – ыйтнă унран поэт. «Сăрнай. Чăвашсем юрри-кĕввине унпа калаççĕ», – хуравланă кĕтӳçĕ.

Александр Сергеевич çĕр каçма Ĕсмел çамĕнче чарăннă. Никита Сверчковăн тата Николай Овчинниковăн картинисем шăпах ĕнтĕ çак ĕçпуçа сăнарлаççĕ. Урамра тĕл пулнă чăваш пикин илемĕ тыткăнланă тет поэт чунне. 1820 çулта çырнă (1895 çулта пичетленнĕ) «Эпĕ вырăс театрĕ çинчен асăрхаттарнисем» статьяна шута илсе Александр Сергеевич Ĕсмелте курнă хĕре кайран Улькка тесе чĕнме тытăннă. Çав ятпах кĕрсе юлнă та вăл чăваш ӳнер тата халăх историне. «Чаплă сăвăçа чăваш пики кăсăклантарнине кăтартасшăн пулни – пĕр тĕллев. Улькка та хăйĕнпе мĕнле улпут кăсăкланнине пĕлесшĕн пулнах ĕнтĕ – ку тепĕр тĕллев. Çавăнпа хĕр-упраçа та Пушкин енне пăхтартăм», – ăнлантарнă кайран Никита Кузьмич «Пушкин чăваш ялне килни» картини пирки. Кĕвентепе икĕ патьен шыв çĕкленĕ пикепе аслă поэт куçĕсемпе тĕл пулаççĕ, Улькка сăнарĕ Пушкин асĕнче ĕмĕрлĕхех юлать. «Картинăна эпĕ çамрăкрах чухне, 1952 çулта ӳкернĕччĕ. Чăваш ялĕн кĕрхи илемне, йăрăс пӳллĕ пике хитрелĕхне те хăрăсах кăтартасшăн пултăм, анчах манăн сăрăсем тĕксĕмреххĕн тухрĕç. Çутăраххисем кирлĕччĕ...» – тесе хаклатчĕ кайран Никита Кузьмич хăйĕн ӳнер хайлавне.

Çак сюжет йĕрне Николай Овчинников малалла тăсрĕ. 1998 çулта «Çăл куç патĕнче» картина ӳкерчĕ. Хайлавра Александр Сергеевича та, уявла тумланнă чăваш пикине те çутă тĕссемпе сăнарланă, иккĕшне ытти çынсенчен уйрăмлатнă.

Алесандр Сергеевич Шупашкарта пулнине те ӳкернĕ ӳнерçĕсем. Пушкин темине чăвашсен çеç мар, ытти халăх художникĕсем те малалла уçас пирки иккĕленес çук.

## ПУШКИНПА ÇЫХĂННĂ ХАВХАСЕМ.

– Ĕсмел аслă урамĕпе уткаласа çӳренĕ хыççăн Пушкин çам çурчĕ умĕнчи сарлака сак çине ларса чăваш ялне, ял-йыша сăнать. Халăхра юлнă сас-хура тăрăх, поэт канса ларнă сак вăхăт иртсен асамлăх хăвачĕпе тулать. Виçĕ енлĕн палăрать унăн юмĕ. Хĕне кайнă чирлисене сипленме пулăшнă тет вăл. Кунсăр пуçне унăн хăвачĕ сыхча вăйне те кăтартнă – инкек-нехекрен хăтарнă. Пушкин канса ларнă сакăн чи паллă енĕ вара – хĕсĕрлĕхрен хăтарма пулăшни. Ача çуратайман хĕрарăмсем ун çине сипленме ларсан кайран çие хăварнă тет! Станцие пăхаканнинчен ирĕк ыйтса ача çуратас текен мăшăрсем сак çинче çĕр каçни тет пулкаланă имĕш.

– Пушкин Ĕсмелте чарăннă каç ялта туй пулнă тет. Çул çӳрекен улпута чăвашсем уява чĕннĕ пулать. Пушкин чăваш туйне пырса курнă, хăш-пĕр йăла-йĕркисене те хутшăннă, халăхпа пĕрле юрланă та ташланă тет. Качча тухакан пикен уяв тумтирĕ поэта калама çук килĕшнĕ, унăн пуянлăхĕ тата илемлĕхĕ питĕ тĕлĕнтернĕ.

– Александр Сергеевичăн çывăх тусĕ – Иакинф атте (Никита Бичурин) – çак тăрăхра ӳссе çитĕннине пĕлнĕрен Пушкин Шĕнерпуçне те çитсе килнĕ-мĕн. Чиркӳпе юнашар пытарнă Никита Яковлевичăн амăшĕн вил тăприне пуç тайнă пулать аслă поэт.

**Иван Тенюшев,**
**Дина Кустова, ЧПУ студентки**

***«Иртнипе малашлăх чиккинче» проект ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать***

# Пурнăҫ – чĕрĕ театр

***«Самантра» пичетленекен чуна ҫӳҫентерекен историсене вулама юрататăн эпĕ. Хăрушла хăюллă мар та, куян тусран чылай паттăр хĕр тесе шухăшланă хам пирки. Тусюлташ та манпа разведкăна кайма нихăҫан та хирĕҫ пулман: шанчăклă этем! Чăвашла каласан – урра! кăшкăрса малалла чупакансенчен пĕри эпĕ. Тĕшмĕшрен шикленмен, тухатмăшран хăраман, юмăҫа пуҫ тайман. Хура кушака курсан та вăл шурă тĕслĕ тесе йышăннă. Кирлĕ пулсан – ăна ярса илсе хӳринчен те туртнă.***



Хăюллине хăюллă та, анчах этемлĕх сăнанине: «Усал-тĕселтен мар, чĕрĕ ҫынран хăра!» – тенине вара пит ăнлансах та кайман эпĕ.

Хăврах пĕлетĕр, танлаштару-виҫере ҫеҫ чăнлăх курăнать. Нумаях пулмасть хамăн паттăрлăха тĕрĕслемелли лару-тăрăва лекрĕм. Мĕн каласси: танлаштарсан – урамри йăмра та манран пин хут хăюллăрах иккен. Сехре хăпнăран йывăҫсем тымарĕсене туртса кăларса таҫта мур шăтăкне чупнине никам та курман-ха хальлĕхе. Ҫут тĕнчери чи хăюллисем, пурнăҫри чăн-чăн паттăрсем тесе калас килет йывăҫсем пирки.

Иккен пĕлместпĕр эпир хамăра хамăр. «Пурнăҫ вăл – театр», – тесе ахальтен каламан, пĕлнĕрен тухнă ку сăмах. Пурнăҫ тем тĕрлине мар, шав пĕр спектакль курасшăн эпир. Хăнăхнă декорацисен хӳттинче пурăнасшăн. Лару-тăру хăнăхнинчен кăшт урăхларах килсе тухтăр кăна – вара камит пуҫланать. Тăван ҫĕр-шыв шутланакан картишне чунтан юратакан чăх пек машина таптаса каяссине пăхмасăр ҫул урлă ҫунат ҫапса чупатпăр. Ҫынна хăратас тесен нумай кирлĕ-и?

Шупашкарта халĕ кам кăна ҫук-ши? Хĕртнĕ ҫатма пек вĕри тӳпеллĕ Африкăран килнĕ ҫамрăксем те чылай. Вĕсем хăйсене ҫын умĕнче йĕркеллĕн, лăпкăн тытнине хăнăхнă ĕнтĕ. Тĕнчере чи сăпайлă халăх хамăр – чăвашсем – пулнине пĕлни пĕтерет. Атту Шупашкарти кашни негра «Тĕп-тĕрĕс воспитани ҫимĕҫĕ» числă ят тахҫанах парса тухмалла. Эпир вĕсене чăрмантармастпăр, вĕсем пире чăрмантармаҫҫĕ. Пурăнатпăр ҫапла кăштăртатса. Ҫавăнпа ҫамрăксен сăмахĕ пулса юлма тивĕҫ каларăша пĕлтерес пуль – астуса юлăр: ташша кăна саккăрла ҫаптармаҫҫĕ, урапа та саккăрла кусаять.

Нумаях пулмасть сехре хăпнинпе чутах вилсе выртаттăм. Киле таврăнатăп. Сукмакпа ҫула кĕскетсе йывăҫсем хушшипе тӳртен тухатăп. Мана хирĕҫ пĕр каччă килет. Ҫанталăк лăпкă тăнине, ҫил вĕрменнине пăхмасăр кăштах ун-кун сулланкалать хăй. Сăнĕпе пирĕн патри ҫын марри таҫтан курăнать – Африка этемми. Ӳсĕр иккен вăл – ҫавăнпа тайкаланать. Аллинче – сăра кĕленчи. Виҫĕ утăм малалла, икĕ утăм каялла утса ывăнать те сывлăш ҫавăрса ямалла сăрине кĕленче майĕнченех ĕҫет.

Урамра хĕрĕнкĕ ҫынна тĕл пулса тĕлĕнтереймĕн пире. Нимĕн те тăваймăн: чăнлăх ҫавнашкал: таҫти ҫичĕ тинĕс леш енчи тĕттĕм кĕтесре пурăнмаҫҫĕ сыпкалама юратакансем. Пире хирĕҫех тайкаланса утса пыраҫҫĕ, хăйăр ҫинче те ҫат кăна чикеленсе шуса ӳкеҫҫĕ. Вĕсен «симĕс ҫĕленĕ» тутлă тĕлĕксем курса хĕл каҫма кĕркунне ҫĕр айне кĕрсе выртмасть, 40 градус сивĕре те шăнмасть.

Пĕр сăмахпа – хăнăхнă эпир хамăр ҫынсене ӳсĕр курма. Кунта вара – негр! Урăх тĕнчерен килнĕ ҫын пекех. Таҫти ҫичĕ тинĕс леш енчен ҫитнĕ тейĕн. Вилсе чĕрĕлнĕ этем те кун пек хăратмасть – ӳсĕр негр! Таҫта Африкăра та, телевизор ăшĕнче те мар – Шупашкар урамĕнчех, мана хирĕҫ килет! Сирĕн пуҫăра вырнаҫать-и ку? Ҫут тĕнчери шуйттансем хăрас пуҫтарăнса Шупашкара килнине курсан та ҫакнашкал хăрамасттăмччĕ пулĕ. Сехре хăпнăран мана хирĕҫ килекен пĕлĕте перĕнес пек ӳссе ларчĕ. Темĕн пысăкăш вăл. Хама ăмăрт кайăк умне тухса тăнă чăх чĕппи пек туятăп: ак ҫиччас ярса илет те хыпса ҫăтса ярать мана.

Куртăм та ҫак «пирĕн этемсем» текен хăнăхнă йĕрке картне ниепле те ларман ӳсĕре – чĕре таҫта кайса кĕчĕ. Куҫа хупрăм та кĕлетке хăш самантра хытса пăрланчĕ. Пурнăҫпа вилĕм хушшинче пĕр хушă ни чĕрĕ, ни вилĕ тăнă хыҫҫăн таҫта пуҫ тӳпинче карт-карт туса илчĕ темйскер: те чĕре, те урăх темĕскер – пĕлмерĕм. Куҫ уҫăлса килчĕ тинех. Тăна кĕтĕм те – мĕн пулать те мĕн килет тесе малалла тинкертĕм. Умра никам та ҫук. Хăрахăра каялла ҫаврăнса пăхрăм. Сехрене хăпартнă хĕвеллĕ Африка элчи манран иртсе кайнă иккен, хăй ҫулĕпе таҫталла утать. Унăн ҫулĕ ҫинче пур-и эпĕ, ҫук-и – ăна нимĕн те пĕлтермест. Асăрхаман та вăл мана. Интереслĕ палăк: чĕрĕ ҫын пекех тăрать тесе иртсе кайнă вăл манран.

***РЕДАКЦИРЕН.** Чĕр шуйттанран хăраман, кăшт хĕрĕнкĕ негра курсан вара чĕри чутах ҫурăлса кайман пирĕн тус хăйĕн аса илĕвĕнче пĕр пулăма ҫутатса панă. Нумай чух эпир инкек-синкеке хамăр шухăшласа кăларатпăр. Ним ҫук ҫĕртен туртса кăларатпăр та хамăр та ĕненсе пăрахатпăр, пирĕн хыҫҫăн вара ыттисем те ĕненсе лартаҫҫĕ. Чĕрне хурине тăман япалашăн пурнăҫа пăсма тытăнатпăр. Ҫакăн хыҫҫăн вара пуҫланать те тамаша. Ăнманни-начарри чуста пек ҫыпăҫма тытăнать. Ас тăвăр: хамăр шухăшласа кăларнă шурлăха пуҫĕпех путма чăнласах пулать. Ҫавăнпа «Саманта» тимлĕн вулăр, ҫырăнса илме ан манăр.*

# Çулçă

***Мĕнле аван çут тĕнчере симĕс çулçă пулса пурăнма. Темĕн пысăкăш йывăç тăрринчен эсĕ таçти-таçти çӳллĕшсенчи тӳпесене тинкеретĕн. Хĕвел çутине ытамлакан симĕс çулçă – чăн-чăн асамçă. Унăн асамне пула ĕнтĕ Çĕр чăмăрĕ çинче пурнăç тытăнса тăрать. Ăна çитекенни мĕн пур тата? Этем шутласа кăларнă хăват, машинăсене ĕçлеттерекенни, çут çанталăка сиен çеç кӳрет, усси сахал унран – этем валли кăна. Çут çанталăкшăн вара вăл чылай чухне вилĕмлĕ. Ӳсен-тăран улăштарнă хĕвел çути хăвачĕ çеç Çĕр чăмăрне пурнăç парать. Симĕс курăк-çулçăн асамлă вăйĕ пулмасан арăслан та выçă вилет!***

Мана кун çути кăтартнă йывăç çӳллĕ те патвар. Хĕвел çутине ытамланă май эпир, çулçăсем, тӳпе тĕсĕн вылявĕпе ывăнмасăр киленетпĕр. Пĕлĕтсемпе калаçатпăр. Çил ачисен шухăшĕсене пĕлетпĕр. Çумăр тумламĕсемпе пите çăватпăр. Тасалăх анлăшĕсем сарăлаççĕ таçта çӳлте.

Çанталăк сулхăнланчĕ, сивĕтсех пычĕ. Пирĕн, çулçăсен, сăн-пит улшăнчĕ: симĕ срен эпир сарă, хĕрлĕ тĕслĕ пулса тăтăмăр. Ăнлантăмăр: аялалла вĕçсе ансан хитре çĕр питне пирĕн илемлĕ кавирпе витмелле, çавăнпа тĕрлĕ тĕслĕ эпир. Юлнă кунсенче – ылтăн кĕркунне – аялти çĕр пичĕпе тĕл пулма хатĕрленетпĕр. Чуна вырнаçмалла мар хитре пуль вăл. Мĕн пур ӳсен-тăран çĕртен шăтса ӳсет, унăн сăпкинче тымарланать. Çĕр пичĕ пулмасан – Çĕр чăмăрĕ те пулмасть.

Акă çитрĕ тинех кĕтнĕ самант: çил ачи хăйĕн çунаттипе перĕнсе мана турат ытамĕнчен хăтарчĕ. Эпĕ аялалла – çĕр пичĕ çине – вĕлтĕртетсе вĕçсе анатăп. Пирĕн – кĕрхи çулçăсен – тĕслĕ-тĕслĕ пĕвсенчен çĕр питне асамлă кавирпе витмелле!

Мĕн ку?! Çĕр питне куртăм та – хăранипе сывлăшра хытса тăтăм. Мĕнпе кăна вараласа пĕтермен иккен этем текен чĕр чун (те вил чун) çĕр питне. Мĕн кăна йăваланса выртмасть аялта. Çĕр чăмăрĕ çинче пурăнакан йĕркеллĕ чун çапла хăтланас çукчĕ тупата. Этем текеннишĕн вара пурпĕр – тăван килне вараласа пултăр ăна. Юмахсенчи виçĕ пуçлă çĕлен усал сывлăшĕпе мĕн чĕррине типсе хăртать те тĕп тăвать. Чăннипе вара юмах та мар иккен ку, виçĕ пуçлă çĕлен тесе этем хăйне калать.

Вара ăнлантăм çынсене турри те, çут çанталăкĕ те мĕншĕн çунат паманнине. Çын вĕçекен чун пулнă пулсан тӳпесен анлăшĕсене вараласа пĕтеретчĕ, тĕнче уçлăхĕнче таса сывлăш хăвармастчĕ.







***ХЫÇ СĂМАХ.***

*«Самантăн» çак кăларăмĕнчен эпир «Хĕвел çутипе сывлакансем» журнал куравĕ ирттерес терĕмĕр. Хитре йывăççен сăн ӳкерчĕкĕсен ярăмĕ пулĕ вăл. Ӳсен-тăрансене чунсăр суккăрсем тесе йышăнни этем эгоизмĕ мĕн таран суккăр та чунсăр пулнине кăтартать. Хĕвел çутине тытса Çĕр çинчи мĕн пур чĕр чуна пурăнма май туса паракан ӳсен-тăран ним те пĕлтермест пек! Ӳсен-тăран пулмасан Çĕр çинче пурнăç пĕтет – çакна манар мар. Йывăççен тепĕр ытарĕ – вĕсем ватăлнăçемĕн хитреленсе пыни. Вăхăта парăнмаççĕ вĕсем!*

*Чуна ырăттараканнине те каламалла – чăнлăхран пăрăнмасăр йышăнмалла: çут çанталăка упрас тĕлĕшпе тăван халăха маттур тесе калаймăн. Чĕр чун тата ӳсен-тăран тĕнчине шеллес туртăм пит сисĕнсех каймасть унăн. Пăхăр-ха йĕри-тавралла: унта-кунта çӳп-çаппа тулса пырать.*

*Çапла вара «Хĕвел çутипе сывлакансем» курава уçатпăр.*

**Роксана МИЛЮДА**

# "Юрлакан чĕресем": кашни концерт - яваплă экзамен

**_Çулталăк каялла «Юрлакан чĕресем» ушкăнăн продюсерĕ тата ертӳçи Владимир Рыбкинпа тĕл пулнăччĕ эпир («Самант», 2013, чӳк, 11№). Пултарулăх-ăсталăхне районсенче тĕрĕсленĕ-туптанă хыççăн çĕнĕ ушкăн 900 ытла çын пуçтарăннă Филармони залĕнче 2013 çулхи чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче олимп старчĕ илнĕччĕ._**



Çакăн хыççăн Чăваш Республикинче кашни ял çĕнĕ ушкăна кĕтсе укăлча хапхине уçса хучĕ. Çумăр-тăман витĕр те гастроле тухма хăрамарĕç, ӳркенмерĕç çамрăк артистсем – продюсертан тĕслĕх илчĕç. Çуркунне, ака уйăхĕнче, «Юрлакан чĕресем» Шупашкарти Яков Ухсайĕ ячĕллĕ кермене пултарулăх «отчечĕпе» халăх умне тухрĕç, чаплă концерт кăтартрĕç – çынсене тĕлĕнтерчĕç те хавхалантарчĕç. Чăваш чĕлхи кунне халалланă юрă-кĕвĕ каçĕ çынсен чĕринче ырă туйăм хăварчĕ.

Çулталăкĕпех çывăх гастрольсене тухса çӳрерĕç çамрăк артистсем: Патăрьел, Елчĕк, Комсомольски, Çĕрпӳ, Муркаш, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсенчи çынсем «Юрлакан чĕресен» фаначĕсем пулса тăчĕç. Артистсене курмасан-илтмесен пурнăçра тем çитмен пекех туйăнать халĕ вĕсене (юрать радиопа итлеме пулать «чĕресен» сассисене). Çамрăк талантсем 50 ытла концертпа халăх умне тухрĕç, раштав уйăхĕнче Пенза облаçне те кайса килчĕç.

Çулла, утă уйăхĕнче, Пенза тăрăхĕнчен каллех чĕнев çитрĕ: тунсăхланă, курасшăн, итлесшĕн «Юрлакан чĕресене» унти тăван халăх. Облаçра пурĕ 10 чăваш ялĕ. Тăватă кунра 7 яла çитсе 7 концерт кăтартрĕç чăвашлăх пилигримĕсем. «Манса ан кайăр, килсех тăрăр! Ытти артистсем те пирĕн пата çул хывчăр», – тесех ăсатса ячĕç Пенза чăвашĕсем пирĕн артистсене.

Кăларăмри «Самант» хăни – Владимир Рыбкин. Тăван халăх культурипе кăсăкланакансем ăна Вăрăм Палюк ятпа та пĕлеççĕ. Унăн пултарулăх çӳпçинче 700 ытла юрă, 35 сăвă кĕнеки. Пĕлтĕр вăл «Юрлакан чĕресем» ушкăн йĕркелерĕ, хăй малкай продюсер пулнине çирĕплетсе пачĕ. «Юрлакан чĕресем» чăваш эстрада тĕнчинче тарăн тымар ячĕç.

***– Мĕнле улшăнусем пулса иртрĕç çулталăк хушшинче? – тĕпчеме пуçларăмăр эпир хăнана çитнĕ Владимир Рыбкин продюсертан.***

– Йыш улшăнчĕ, пысăкланчĕ. Владимир Тимофеев солист вĕренсе пĕтерчĕ те яла пурăнма кайрĕ, Рина Светопольскаяна хор искусстви ытларах илĕртрĕ. Çапçамрăк «ватă гварди» – пăрлă шыва сикме те, вутта кĕме те хатĕр Катя Семенов, Света Иванов, Вика Павлов Владимир Рыбкин săввисемпе çырнă юрăсене ывăнмасăр шăрантараççĕ. Ушкăна çĕнĕ çынсем те йышăнтăм, вĕсем:

– Галина Алексеева (ЧПУ, искусствăсен факультечĕ),

– Артем Семенов (часах Чăваш Енре унăн сассине палламан çын та юлмасть),

– Лариса Степанова (Музыка училищи),

– Людмила Капитонова (Коопераци техникумĕ. Люда пирки хăй вăхăтĕнче «Самант» та çырнăччĕ).

Тата икĕ музыкант халĕ пирĕн ушкăнра: тĕрлĕ конкурс лауреачĕ Иван Советников (Культура институчĕ) тата Алексей Сергеев (Музыка училищи). Пире синтезаторпа калакан та кирлĕ. Чăваш тĕнчи пушă мар – тупăнать.

***– Синтезаторпа калакан çамрăк талант хăйне Владимир Рыбкин шыранине «Самантра» вуласа пĕлет те акă – чупса та пырать. Çапла вара, «Юрлакан чĕресен» терменĕ ӳссех пырать – хĕртнĕ хурçă пек çирĕп факт ку!***

– Халĕ эпир вокалпа инструментсен ансамблĕ. Ун пекки – уйрăм продюсер тытса тăракан ансамбль – Чăваш Енре тек çук. Патшалăх ансамблĕ пур – «Çеçпĕл». Ыттисем пурте – эстрада ушкăнĕсем çеç, ВИАсем мар.

***– «Юрлакан чĕресемпе» ĕçлеме çăмăл-и? Аслă ăрăвăн: «Хальхи çамрăксенчен пархатар çук», – текен нихăçан кивелмен гимне аван пĕлетпĕр. Çав вăхăтрах талантлă çынсем кăшт юнтарса илме хирĕç маррине те асра тытатпăр.***

– Ансамбль артисчĕсенчен чи асли те 22 çулта çеç. Продюсерăн çамрăксемпе пĕр чĕлхе тупмалла, унсăрăн нимĕн те тăваймастăн. Пултарулăх ушкăнĕ пĕр çемье пек чăмăртансан вара – эпир хăпарайман сăрт-ту çук çут тĕнчере. Тӳрех калам: «Юрлакан чĕресем» – пысăк çемье. Ансамбльти психологи сывлăшĕ сиплĕ те илĕртӳллĕ. Пултарулăха аталантаракан факторсенчен пĕри – çемьелĕх туйăмĕ, пĕр-пĕрне ăнланни, пулăшни, мал тĕллевлĕн ăнтăлни. Нумай пулмасть кăна пĕр-пĕрне палламан çамрăксем хĕрӳллĕ ушкăна чăмăртанни асамлă юмах пекех туйăнать. Репетици-концертсенче çеç мар, интернет тетелĕнче те яланах пĕрле вĕсем. Маншăн тăван ачасем вырăннех «Юрлакан чĕресем». Çамрăксемпе ĕçлеме хаваслă та кăмăллă: хăв та чунпа çамрăкланатăн.

***– Курăнать çав: çулталăк каялла кăшт туллирех***

***продюсер ларатчĕ редакцире. Халĕ вара пĕвне яштакланнă, сăнпа якалнă.***

– Ун чухне 107 килограмм таяттăмччĕ. Халĕ – 90! Продюсер ĕçĕ çакă ĕнтĕ. Вĕçĕмсĕр чупса çӳремелле, ăçта кăна çитместĕн. Апат çиме те вăхăт çук. Пиçиххинче çĕнĕ шăтăк шăтарса ĕлкĕрейместĕп. Спортсменсен тренерĕсем мăнтăрланма пултараççĕ те пулĕ, чаплă продюсер вара нихăçан та самăрăланаймасть.

***– Астăвасса, тен, хам та юрлама тытăнăп тесе хавхаланса каласа панăччĕ тахçан. Владимир Рыбкин шăпчăкпа тавлашнине халĕччен никам та илтмен-ха темшĕн.***

– Юрласси пирки калаçмастăп та. Сцена çинче хамăн амплуана тупрăм темелле. Кам тĕшмĕртнĕ Владимир Рыбкин пултаруллă конферансье пулать тесе? Концертсене хамах ертсе пыратăп, куракансене те килĕшет. Малтанхи пайĕнче кулăш-тамăш каласа паратăп, концертăн иккĕмĕш уйрăмĕнче хамăн сăвăсене вулатăп. Юрату лирикине хĕрарăмсем уйрăмах тимлесе итлеççĕ. Хăшĕсем куçне чарсах тăнлаççĕ, ахăртнех, ассоциативлă темăсем: пулни-иртни аса килет, паянхи вут-кăвар хыпса илет. Кăмăлĕсене çичĕ пĕлĕте хăпартса янăшăн концерт хыççăн пире тав туma пыракансем сăвăсен çеç мар, юрăсен те сăмахĕсем хитре пулнине палăртаççĕ.

***– Тухатуллă сăмах пур: репертуар!***

– Ансамбль эпĕ çырнă юрăсене юрлать. Активлă репертуарта 30 ытла юрă. Юрă-кĕвĕ çӳпçи çĕнелсех пырать. Кĕвĕсене ытларах Сергей Марков композитор-аранжировщик çырать. Пирĕнпе алла-аллăн ĕçлекен композиторсем – Виктор Дмитриев, Анатолий Печников, Константин Рязанов, Юрий Кудаков. Ансамбльти Лариса Степановăн та юрă-çемĕ енчен турă пани пур: икĕ юрă кĕвĕлерĕ вăл. Çитес вăхăтра хĕр-упраç чăваш эстрада тĕнчинче паллă композитор пулса тăрасси пирки иккĕленместĕп. Талантсене аталантарма та, аталанма та условисем пур пирĕн.

***– Пĕлнĕ тăрăх – вырăсла юрлассипе те ăсталăха ӳстеретĕр.***

– Вырăсла та шăрантарма тытăнчĕç «Юрлакан чĕресем». Хальлĕхе 5 юрă. Тексчĕсен авторĕ – Владимир Рыбкин. Репертуарта вырăсла юрăсем пулассине ушкăн йĕркеленсенех каланă. Ăсталăха ӳстерес ĕç тем тĕрлĕ те темĕн енлĕ. Урăх чĕлхепе юрă шăрантарни пултарулăх хăватне хăпартать. Тепĕр япала та пур. Билетсем сутнă чух: «Вырăсла юрлатăр-и? – тесе тăтăшах ыйтаççĕ. – Эпир те пырса кураттăмăр», – теççĕ. Эпĕ вĕт чăваш поэчĕ кăна мар – продюсер, ансамбль ертӳçи, куракан-итлекен кăмăлне пĕлмелле, шута илмелле.



***– Продюсершăн вак-тĕвек ăпăр-тапăр çук апла? Пĕтĕм ĕç стратегиллĕ?***

– Кашни ĕç питĕ пĕлтерĕшлĕ. Чылай чух унăн пĕлтерĕшĕ кайран кăна курăнать, малтан вара ниме те пĕлтермест пек. Улталанма юрамасть продюсерăн. «Юрлакан чĕресем» йĕркелесе ярсан хăшĕсем: «Владимир Рыбкин группа-однодневка туса хучĕ», – тесе те каларĕç. Пурнатпăр-ха: шав малалла утатпăр. Халăх та пире пĕлсех пырать. Тĕслĕхрен, концерт курма ялта 50 яхăн çын пухăннă тейĕпĕр. Хĕпĕртемелле кăна уншăн: паянхи куншăн – клуб тулли халăх ку. Концерт хыççăн вара çынсем: «Сире курма хăвăра пĕлмесĕрех килтĕмĕр. Çавăн пек лайăх артистсем çитнине пĕлнĕ пулсан ыттисене те пуçтарса килеттĕмĕр: 50 çын мар, 150 куракан пухăнаттăмăр», – теççĕ. Савăнатпăр çакна илтсен, пирĕн ăсталăха, пултарулăха пысăка хурса хаклаççĕ. Чăваш тĕнчине, тăван халăха эпир те кирлĕ!

***– «Юрлакан чĕресен» çĕн евĕрлĕхсем пур-и?***

– Малтан эпир хуллен, майпен ритмлă юрăсем сцена çине ытларах кăларнă. Пуç пулса тăракан тематика – чăвашлăх, тăванлăх, атте-анне, тăван ял ярăмĕсем. Чун валли юрланă чух хăвăрт, асар-писер ритм кирлĕ мар. Халĕ тактика улшăнчĕ: çĕнĕ сезонра хăвăрт кĕвĕллĕ юрăсене ытларах кăларатпăр. Концерт пынă вăхăтра залрах ташлас текенсем нумай: куракансен кăмăлĕ вара пирĕншĕн – саккун. Хăвăрт ритм универсаллă – пурин кăмăлне те каять.

***– Пĕлтĕрхи калаçăва аса илсен – палăртса хунисене пурне те пурнăçланă эсир. Пĕр пункт çеç – ансамбль йышĕнче ташлакансем те пулĕç тени ыйтуллăччĕ. Халĕ пурте ăнланмалла. Репертуарта ташă ритмлĕ кĕвĕсем юрла-юрла пурăнма тытăнсан – ташлакансем те пулаççĕ.***

***Кĕр мăнтăрĕпе артистсем çĕнĕ сезон уçаççĕ. Сирĕн ансамбль кĕркуннене мĕнлерех кĕтсе илет?***

– Гастрольсемпе. Кĕркунне-хĕлле районсене сукмак хыватпăр. Пире республикăра çеç мар, чăвашсем пурăнакан тăрăхсенчен те чĕнеççĕ. Диаспора анлăшне килес çулхи утă-çурла уйăхĕсенче тухса çӳрĕпĕр: ансамбльте студентсем пур – вĕсене вĕренӳрен уйăрас мар. Юпа уйăхĕнче планланă икĕ концерт пирки вара тĕплĕнрех каласа парас. Юпан 16-мĕшĕнче Комсомольскинчи культура керменĕнче пысăк концерт лартатпăр. Каçалсем пире Валентина Михайлова юрăçăна та пĕрле илсе килме хушрĕç. Районти культура керменĕн залĕ 300 çынна йышăнать. Çĕнĕ репертуар, çĕнĕ йыш, пултарулăхăн çĕнĕ вут-хĕмĕ тĕрĕсленĕ Каçалта-Комсомольскинче. Тĕрĕссипе, пирĕншĕн кашни концерт – яваплă экзамен. Çавăн пек пулнă, халĕ те çапла, çавăн пекех пулĕ те. «Юрлакан чĕресем» – яваплă чĕресем.

Юпа уйăхĕн 30-мĕшĕнче вара пурне те Шупашкарти Яков Ухсай ячĕллĕ культура керменне чĕнетпĕр. Программа вĕресе хăпарасла анлă – чăн-чăн уяв каçĕ! Концерта ЮТВ телеканалпа пĕрле лартатпăр. Уяв каçне ертсе пыраканĕсем – Чăваш халăх артистки Людмила Семенова тата Евгений Григорьев шоумен. Иван Христофоров, Константин Ефремов, Светлана Яковлева, Ольга Прокопьева, Алексей Шадриков тата ытти паллă юрăç концерта хутшăнма кăмăл турĕ. Урăхла каласан, «Кĕр сăри» текен тăван халăхăн мешехине хула культурин анине кăларатпăр.

***– Çамрăк талантсем алăкран шаккасах тăраççĕ-и?***

– Пирĕн ансамбле килес текен нумай. «Артиста мар, вĕренекен пеккине те пулин илĕр-ха», – тесе калакансем те пур. Çын кирлĕ пулсан вăл ятарлă пĕлӳ илнине е ăçта вĕреннине пăхатăп. Юрă-кĕвĕ тĕлĕшпе вĕреннĕ çынпа ĕçлеме çăмăлтарах.

***– «Юрлакан чĕресен» дискĕсене те сутлăхра курнăччĕ. Миçе альбом сирĕн?***

– Çулталăк каялла пĕр диск кăначчĕ-ха. Унтанпа 10 альбом кăлартăмăр.

***– «Самант» тусĕсене хăвăрăн пысăк вăрттăнлăха уçса пама вăхăт. «Юрлакан чĕресен» пултарулăх тата пурнăç девизĕ мĕнле?***

– Юрласан чун-чĕре – тунсăх пусмĕ сире!

**В.СТЕПАНОВ**

# Чулхулари Акатуй



***Кăçал çулла тăван культурăшăн сулмаклă утăмсем чылай пулчĕç. Вĕсенчен чи пĕлтерĕшлисенчен пĕри Чулхула Акатуйĕ тесе хакламалла. Чăвашсен сакраллă уявне Парижра е Петропавловск-Камчатскийĕнче паллă тунипе тĕлĕнтерейместĕн: хамăр ял! Чулхулара Акатуй янраттарни вара – пачах урăх юрă.***

Атăл тăрăх кўршĕллĕ пулин те Чулхула облаçĕпе Чăваш Ен пĕр тăванлăх туйăмĕпе туслашса пурăнаççĕ тесех калаймăн. Вырăс патшалăхĕн чиккинчи лартса хунă карман-хула чĕмĕ паян та кăрал сывлăша ас тăвать. Совет влаçĕ вăхăтĕнче Горький чăвашсемшĕн тĕп хула шутланнă тапхăр та пулнă. 1929 çулхи утă уйăхĕн 15-мĕшĕнче Атăлçире Чулхула крайĕ туса хунă, унăн тытăмне Чăваш АССРĕ те кĕнĕ. Юпа уйăхĕн 7-мĕшĕнче Чулхулана Горький ят панă хыççăн çак административлă территори историре Горький крайĕ ятпа юлнă. 1936 çулхи раштавăн 5-мĕшĕнче Горький крайне пăрахăçланă. Администраци çиттипе 7 çул пĕрле пĕркенсе ларнă пулин те икĕ халăх хушшинче чикĕлĕх туйăмĕ сĕвĕрĕлеймен.

Чулхула облаçĕнче чăвашсем XX ĕмĕрте çеç никĕсленме тытăннă. Пирĕн диаспора тĕпрен илсен Воротынск районĕнче пурăнать. Шереметьево, Лысая Гора, Казански, Петровски, Сосенки ялсемпе поселоксем никĕсленĕ Чулхула чăвашĕсем. Юлашки çулсенче Воротынск районĕнчи чăвашсем Шакла Ту (Лысая Гора) поселокĕнче «Питрав пуххи» ирттерессине йăлана кĕртрĕç. Питрава паллă тума Чăваш Енри пултарулăх ушкăнĕсем те килме тытăнчĕç. Юрă-ташă янăранисĕр пуçне уявра наци апат-çимĕçĕпе сăйлаççĕ, ал ĕç ăсталăхне кăтартаççĕ, паттăрсем вăй виçеççĕ.

«Питрав пуххи» çапах та урăхларах уяв. Чулхула Акатуйĕ вара – Атăлçири халăхсен пурнăçĕн çĕнĕ çаврăмĕ. Вăл Анат Новгород пурнăç йăли-йĕркине кĕрессе шанас килет. Чулхула уявне халăх элчи пулса ЧНК Президиумĕн членĕ Юлия Анисимова кайса килчĕ. Ăна сăмах.

– Чăваш Наци Конгресĕ ячĕпе Чулхулана каймаллине ЧНК 1-мĕш вице-президенчĕ Валерий Клементьев пĕлтерчĕ. Етĕрнери «Калинка» ансамбльпе тата Канаш районĕнчи пултарулăх ушкăнĕпе Анат Новгорода çитрĕмĕр. «Çавăнта-çавăнта çитрĕмĕр. Ăçта пирĕн рандеву?» – ыйтатпăр телефонпа Чулхула регионĕнчи «Чăваш культура центрĕ» обществăллă организацийĕ председателĕнчен Анатолий Ефимовран, – каласа парать Юлия Елисеевна. – Умри хĕреслĕ урамра сылтăмалла пăрăнăр та – мана куратăр!» – ăнлантарать Анатолий Петрович. Чăнах та, пăрăнтăмăр та – çул хĕрринче чăваш ялавне пĕр урам сулласа тăракан çынна куртăмăр. Çавăн пек кĕтсе илчĕç пире!

Майăн 1-мĕшĕ ячĕллĕ культурăпа кану паркĕнче утă уйăхĕн 5-мĕшĕнче иртрĕ акатуй. Пуçтарăннисен, иртен-çўренсен куçне тыкăнлаканнисем чăваш пикисем пулчĕç. Пурте вĕсемпе сăн ўкерттересшĕн. Хаçат тата телевидени журналисчĕсем те вĕсем тавра явăнса çўрерĕç. Мускаври телевиденирен те пурччĕ çынсем, – аса илет Юлия Анисимова. – Мана мĕн тĕлĕнтерчĕ? Халăх умĕнче чăваш тумĕ тăхăннă 6 чиперкке. Пăхатăн та вĕсем çине – Чăваш Енĕн хăш тăрăхĕнче çуралса ўснине тўрех пĕлетĕн. Тумĕсене хăйсемех хатĕрленĕ вĕсем, кашни вара хăйĕн тăван кĕтесĕн кĕпине çĕленĕ: анатри, тури, хутăшши. Тĕлĕнсе каймалла костюм ансамблĕ пулса тухнă – питĕ хитре. Тумтир ăсти Ольга Шмелева «Чăваш халăх костюмĕ» курав йĕркеленĕ – пуçтарăннисене питĕ килĕшрĕ çав выставка. Алина Артемьевăн хĕр ачи «Пукане» юррине мĕнлерех юрласа пачĕ тата! Кăмăла кайнă тепĕр пулăм – чăваш уявне ытти наци çыннисем хаваспах хутшăнни. Вĕсем те пултарулăх номерĕсемпе çынсене савăнтарчĕç.

Чулхулара Акатуй ирттернинче виçĕ çыннăн тўпи пысăк. Вĕсем – Анатолий Ефимовпа унăн пулăшаканĕ Петр Яргутов тата Чулхулари чăваш наци культура вырăнти автономийĕн председателĕ Алина Артемьева. Вырăнти автономи йĕркеленни çулталăк ытларах кăна. 2013 çулхи нарăсăн 16-мĕшĕнче учредительнăй пуху иртнĕ, пуш уйăхĕн 14-мĕшĕнче регистрациленнĕ. Çакăн хыççăн пултарулăх ушкăнĕ те çунат сарнă. Ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче вара чăваш чĕлхи кунĕ ячĕпе концерт лартса пама та мехел çитерне хастарсем. Халăха юрă-кĕвĕпе савăнтаракан «Чулхула пикисене» ытларах «Чулхула чиперукĕсем» тесе калаççĕ. Облаçре иртекен уявсене тухса çўреççĕ чăваш пикисем, пур çĕрте те вĕсене хапăл туса йышăнаççĕ. Хисеп хучĕсемпе тав çырăвĕсен шучĕ çук. «Çулталăк хушшинче Чулхула пире асăрхарĕ çеç мар, чи çутă наци культурисенчен пĕри тесе палăртрĕ», – тет Алина Артемьева.

Кăçал «Чулхула» пикисем Шупашкар Акатуйне те хутшăнчĕç. Килес çулхи уява вара пысăк концертпах пырас шухăш пур. Хăйсем кĕвĕленĕ-çырнă юрăсем те янăрĕç малашне!

– Чулхула Акатуйĕн кĕтменлĕхĕ – уявра палланă çынсемпе тĕл пулни. Шупашкарта курнă-ха вĕсене, халĕ вара хамăр вĕсен кĕрекинче. Чулхулара тата Чулхула облаçĕнче ăслă-тăнлă ентешсем, пысăк ертўçĕсем пурри питĕ савăнтарать. Уяв ăнăçлă иртсе кайрĕ. Ăна йĕркелекенсем килес çул çамрăксем валли те ятарлă номерсем хатĕрлеме калаçса татăлчĕç. Чăваш эстрада юррисем те янăрĕç паркра, – уяв стратегийĕн «вăрттăнлăхне» уçса пачĕ Юлия Елисеевна.

**Ева ЦИАЛКОВСКАЯ**



# Мăнукăм, санăн хĕрес мунчара вĕт!

Пирĕнтен виçĕ кил урлă пурăнакан Марине ирех пирĕн пата вĕçтерсе çитрĕ. Унăн шурса кайнă питне курсан хăраса ӳкрĕм.

– Пĕлетĕп, санăн ĕç нумай, çапах та манпа ларма вăхăт туп-ха кăштах, – терĕ кăмака çумне таянса.

– Тем пулман пулĕ те? – асăрханса ыйту патăм хайхискере.

– Пулнă çав, пулнă, – терĕ чĕтренсе тухакан сассипе.

Унтан диван çине ларчĕ те сăмах çăмхине сӳтме тытăнчĕ.

– Кӳршĕ ялта пурăнакан кукамай вилсен ăна пытарас ĕç йăлтах ман çинче пулчĕ. Ара, эпĕ унăн пĕртен пĕр мăнукĕ-çке. Урăх никам та çук унăн çывăххи. Икĕ каç пĕр чĕптĕм куç хупмарăм. Тĕпĕртетрĕм кăна. Виççĕмĕш каçхине алăк çине пысăк çăра çакса килелле çуранах таплаттартăм. Пилĕк çухрăм утнă чухне йывăр шухăшсенчен те хăтăлăп терĕм хам ăшра. Çапла кайсан-кайсан куç хупăнма пуçланине туя пуçларăм. Ыйхăпа кĕрешсе ял пуçне çитсе ӳкрĕмех. Киле çитиччен утмалăх пур-ха. Çавăнпа автобус чарăнăвĕ патĕнчи сак çинче канса илес шухăш çуралчĕ те – хăма çине тĕршĕнтĕм...

– Ачам, ачам, капла хĕрĕх градус сивĕре шăнса вилетĕн вĕт! Атя, тăр. Санăн киле çитмеллех! – тесе такам каланăран аран куççене уçрăм.

Турăçăм! Ман умра шап-шурă тум тăхăннă анне тăра парать. Хăраса ӳкнĕрен куçа йăвалаласа илтĕм. Çук, пур пĕрех тăрать анне ман умра.

– Анне, эсех-и ку? Ĕненес килмест. Сана эпир вунă çул каяллах пытарнăччĕ вĕт-ха, – терĕм чĕтренсе тухакан сассăмпа.

– Çапла пытарнă, акă нумай пулмасть сан кукаму та ман пата килчĕ. Хальлĕхе иккĕнех пурăнăпăр. Эсĕ, эсĕ кирлĕ мар пире. Санăн киле çитмелле паян. Атя, ут ман хыççăн. Кăшт ăсатса ярăп сана, – терĕ вăл шăппăн çеç.

Мана куç пăврĕ тейĕн анне. Унран юлас мар тесе утса мар, чупса пыратăп. Акă хĕресле урама çитсен анне тăп чарăнчĕ.

– Ачам, малалла иртме юрамасть манăн. Ĕнтĕ пĕчченех кай. Манăн та хамăн çĕр-шыва вăхăтра çитсе ĕлкĕрмелле, – терĕ те куçран пач çухалчĕ.

Лисук, пĕлетĕн-и, киле епле çитнине ас тумастăп. Ара, хытă чупнăран ура çĕре лекнине туймарăм. Халĕ те чĕре лăпланаймасть. Кĕлеткерен сиксе тухса тарассăн туйăнать. Ĕнерхи шартлама каçранпа пуçри темиçе çӳç пĕрчи те шуралчĕ ахăртнех, Лисук, – тесе вĕçлерĕ хăй сăмахне Марине.

Тусăм темле юмах каланă пек туйăнчĕ, çавăнпа чĕнмесĕр ларнă хыççăн кулса ятăм.

– Ĕненесех килмест пек, – терĕм ун çине пăхса.

– Сана улталанипе мĕн те пулин усă пулать-им мана? – кӳренчĕ пулас вăл.

Маринене ахалех çапла каларăм. Тепĕр эрнеренех хампа та пуçа вырнаçман ĕç-пуç пулса иртрĕ.

... Хулара пурăнакан пирĕн инке мунча тесен каçăхсах каять. Яла çитсен алла пуртă тытса хурăн вутти çурать. Тĕрĕссипе, мунчана пурте юрататпăр-ха. Хам та унта кĕрсе ларсан икĕ-виçĕ сехетсĕр те тухмастăп. Лапка уйрăмах илĕртет пире инкепе иксĕмĕре. Ăмăртмалла çапăнатпăр вĕт милĕкпе!

Ах, чăнах та, мĕн тери аван мунчара! Çăвăннă чухне мунчала хĕресе çакланчĕ те чутах татса пăрахатчĕ. Çавăнпа ăна çухатас мар тесе вăчăрине майран вĕçертрĕм те хĕресе чӳрече янаххи çине хутăм.

...Мана вупăр пусать. Ниепле те вăранаймастăп. Хура мĕлкене тĕртсе ярас тетĕп, анчах алăсене такам çыхса хунăн хускатаймастăп вĕт! Чылайччен асапланнă хыççăн урапа тапрăм та – çухалчĕ хайхискер. Йĕп-йĕпе тар ăшĕнче вăранса кайрăм.

– Турă çырлахтăрах, юрать тĕлĕк çеç ку, – терĕм çамкана алăпа сăтăрнă май.

Ыйха путрăм çеç, хайхи вупăр каллех ман çума çулăхрĕ. Пăвать вăл мана, пăвать! Ай, хăтăлма мĕн тери йывăр иккен унран. Тапаçлана-тапаçлана вĕçерĕнтĕмех унран та – вăранса кайрăм. Каллех йĕп-йĕпе тара ӳкнĕскер вырăн çинчен сиксе тăтăм. Хăрушă тĕлĕк аварĕнчен хăтăлас тесе унталла-кунталла уткаласа çӳреме тытăнтăм. Ах, курас килмест çав хура мĕлкене урăх тесе сăх сăхма тытăнтăм. Вăхăт ирттермелле тесе чей те вĕретсе ĕçрĕм.

Усси пулмарĕ, тĕлĕкре çав-çавах манран хăпмарĕ çав хăратмăш. Армак-чармак куçлăскерне курсан чĕре çурăлса тухать пулĕ терĕм. Ыйхăран вăранас тесе тем пек тапаçлантăм, анчах вăл мана çаплах пăвма чарăнмарĕ.

– Эх, ачам! Айăпли хăвах-çке. Ара, хăв хĕресне мунчари чӳрече сакки çинчех хăвартăн вĕт! Хĕресе ăна нихăçан та, ниçта та măйран хывмалла маррине пĕлместĕн-им? Ялан çумра пулмалла унăн, ан ман çакна нихăçан. Пĕррелĕхе каçарăп сана, хăваласа ярам çав вупăра, – терĕ аякри сасă.

Лайăххах пăхрăм та – вун пилĕк çул каялла пытарнă асанне тăра парать!

– Асанне, асанне, эсĕ вилнĕ вĕт-ха! Мĕнле çапла утса çӳресе калаçма пултаратăн тата? – ыйтрăм хăранипе пĕр кĕтессе тĕршĕннĕ май.

– Ан шиклен, тивместĕп. Унта пирĕн патăмăрта сансăрах çамрăк нумай. Пулăшма çеç килтĕм, çак хурамкка сан çумна куршанак пек çулăхнине курсан вĕресе кайрăм, тупата турăшăн та. Çавăнпа пĕтĕм ĕçе пăрахса кунта васкарăм, мăнукăм, – терĕ асанне ман çине ăшшăн пăхса.

Ух! Каллех мунчари пек тарласа вăрантăм. Çав тери çăмăл пулса кайрĕ мана. Асанне сăмахĕсем хăлхарах янăранăран çур çĕр иртнине пăхмасăрах мунчана вĕçтертĕм. Хĕресе чăмăртаса тĕк пек килелле чуптартăм.

Çакăн хыççăн, чăн та, урăх çулăхмарĕ мана çав хăратмăш.

...Мачча çине пăхса выртнă май Марине аса килчĕ. Ăна амăшĕ, мана вара асанне йывăр вăхăтра пулăшрĕ-çке. Ун чухне ахалех тусăмран шăл йĕрсе тăтăм ваçка. Иккен пурнăçра тем те пулса иртет.

**Петĕр ЛИСУКĔ**

***Николай Каштанов çырса кăтартнă ĕç-пуç Патăрьел районĕнчи Çĕнĕ Ахпÿртре пулса иртнĕ. Унăн шухăшĕпе: «Кулăш енчен Одессăпа Габрово хулисен шайне çитеймесен те çивĕч сăмах çуратакан Çĕнĕ Ахпÿрт Чăваш Енре чăнласах та малта пулас». Тăван ял патриочĕсемпе тавлашма йывăр. Тепĕр тесен – кам пĕлет: тен, тĕрĕсех ку. Вуласа тухăр та – хăвăр шухăшлăр!***

# Авланаймарĕ

***Салтакран таврăнни пĕр уйăх иртсен Муччи Валери авланма шут тытрĕ. Икĕ çул хушши хĕрсене курман чухне чылай çăмăлтарахчĕ, еплешке! Ялта вара – кашни кун чиперккесем куç умĕнче: пĕринчен тепри якăш та хитререх... Пурин еннелле те куçпа алă туртăнать. Епле чăтăн ку нушана!***

Пĕррехинче, çутă кун каç еннелле сулăнсан, Валери юлташĕсене пуçтарчĕ.

– Ну, ахпÿртсем, кĕçĕр пирĕн кÿршĕ ялтан хĕр вăрласах пулать. Йăлине эпир шухăшласа кăларман. Лаша кÿлер те – ухатана!

– Милици уйрăмне лекес марччĕ, – шикленкелет Шачали Санькки. – Миçе çул параççĕ-ши хĕр вăрланăшăн? Саккунне вуласа пĕлер пуль малтан.

– Хĕр вăрланăшăн кам тĕрмене лартать, тăм пуç! – вĕриленет Шекке Ваççи. – Вăрласа килнĕ миçе хĕр чиперех пурăнать Шапакассинче, а? Тĕттĕмре сар хĕр вырăнне ват карчăка лартса килес мар. Çавăн çинчен шухăшлăр, хусахсем!

Чылай вăхăт сÿтсе явнă хыççăн Валерипе Санькка колхоз витинчен лаша кÿлсе анчĕç. Валери урапа çине улăм тултарчĕ, шăтса пĕтнĕ кивĕ тÿшек йăтса тухса хучĕ: çĕнĕ кине çемçерех пултăр...

Çукал Иван пÿрчĕ умĕнче ларакан çамрăксен ушкăнĕ лав çинче ларса пыракан Муччи Валерипе юлташĕсене курсанах тăрăхласа кулма пуçларĕ. Ахпÿртсем вĕт – кулăш ăстисем.

– Ăнăçу сире, хусахсем! – шăл йĕрсе кăшкăрчĕ Çуçук Толи. – Туя чĕнме ан манăр!

– Сансăр мĕнле туй пултăр, – парăнасшăн мар Валери, – сан пек нумай хутчен авланнă çын ялта тек çук. Тен, пире те кăштах вĕрентĕн.

– Хĕрне илсе килсенех хама чĕн, – хăйĕннех перет Çуçук. – Вара практика ирттерĕп: мĕн хыççăн мĕн тумаллине васкамасăр йĕркипе хамах кăтартса парăп.

– Мĕн калаçан унпа? – тарăхса кайрĕ Санькка. – Вăрласа килнĕ хĕрне те илсе кайĕ ак. Шанăçран пачах тухрĕ. Но-оо! – Пухвир!

Тилхепе вĕçĕпе лашана çапрĕ те Санькка – кĕмсĕр-тетекен урапа куçран çухалчĕ. Çамрăксем вара шавлăн кула-кула пулас кине кĕтме пуçларĕç.

– Ирччен пур пĕрех килеççĕ, – шантарсах каларĕ Çуçук Толи. – Хам хĕр вăрласа курнă. Çак ĕçре хăвăртлăхпа ăнсăртлăх кирлĕ. Лав çине вырттар та вĕçтер кил еннелле!..

Сăмах çине сăмах. Кулăш хыççăн кулăш. Сехет те иртмерĕ – инçетрен килекен урапа сасси илтĕнчĕ.

– Ан шавлăр-ха! Такам килет пулас! – кăшкăрчĕ Çеппи ачи. – Валери мар-ши? Питĕ хăвăрт-çке...

– Манран вĕренсе пыраççĕ, – мăнаçлăн хуравларĕ Толя. – Вçо-такки пĕрре кăна мар пуçарăннă çак ĕçе.

Çамрăксем шăпланчĕç. Кĕçех урам кукăрĕнчен урапа кусса тухрĕ. Ак тамаша! Лаши çук! Пухвир урхамах вырăнне турта хушшине Валери кÿлĕннĕ. Хыçалтан лава Санькка Ваçça тĕртсе пыраççĕ. Виççĕшĕ те тара ÿкнĕ, аран сывлаççĕ.

– Кун пеккине çуралнăранпа та курман! – пĕççине шарт çапрĕ Çуçук Толи. – Хĕр вăрлама кайнă каччăсен лашине вăрласа кайнă.

Урамра ларакансем кăшкăрсах кулса ячĕç.

– Мĕн ахăратăр? – çамки çинчи тарне шăлса илчĕ Валери. – Никам та нимле лаша та вăрламан.

– Ăста вара колхоз чапĕ Пухвир?

– Витере.

– Хăш ял витинче? – парăнасшăн мар Çуçук Толи.

– Хамăр ялтинчех.

– Председатель тытса чарчĕ, – ăнлантарса пачĕ халăха хĕр вăрлама ăнăçсăр кайса килнĕ Валери. – Правлени умĕнчен иртсе пынă чух шăпах Петр Васильевич крыльца çине тухрĕ.

– Çамрăксем, ăçталла çул тытатăр? – тет.

– Авланма шут тытрăмăр, Петр Васильч! – хуравларăмăр эпир.

– Аха, хамăр ялта, сначчăт, хĕр юлмарĕ. Кÿршĕ ялтан илсе килес терĕр, – вĕрилене пуçларĕ председатель. – Ну-ка, хусахсем, лашана – витене, урапана – килелле! – терĕ те хучĕ! Вăт, хамăр туртса килетпĕр халь...

Çапла вара председатель «пулăшнипе» Муччи Валери тепĕр çулталăкран çеç авланчĕ. Хĕрне те тăван ялтах тупрĕ. Кÿршĕ урамра.



# Кашни çимĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ

***Хамăн пĕрремĕш юратăва эпĕ 14 çул тултариччен палламан та. Пĕр ялсемех пулсан та ача чух асăрхаман ăна. Вăл манран 10 çул аслă, шкул хыççăн ялта пурăнман та темелле – Мускав таврашне ĕçлеме çӳренĕ. Эпĕ вара шкулта вĕренетĕп: сăмса шăлма та тин çеç вĕреннĕ, çут тĕнчере йĕкĕтсем те пуррине халь кăна асăрханă.***



Çĕнĕ çул хыççăн Шупашкарта пурăнакан иккĕмĕш сыпăкри аппасем килчĕç – вĕсем манран 3-4 çул аслăрах. Каçпа дискотекăна кайрăмăр. Ку таранччен эпĕ клуба çӳременччĕ-ха. Ташă каçне йĕркелекенĕ, диджей – Святослав, Çĕнĕ çула Мускав облаçĕнчен таврăннăскер. Кĕвĕ-çемĕ аппаратури те хăйĕнех, килĕнчен илсе килнĕ. Çавăн чухне ас туса юлнă эпĕ диджея.

Пуш уйăхĕн 8-мĕшĕ çитрĕ. Эпĕ юнашар ялти шкулта вĕренеттĕм, вищĕ ялтан çӳретчĕç унта. Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери уяв кунĕ ячĕпе эпир, шкул ачисем, хамăр ялти культура çуртĕнче концерт лартатпăр. Репетици вăхăтĕнче аппаратура ĕçлеме пăрахрĕ (вăрттăн çыртан саккунĕпе килĕшӳллĕн ĕнтĕ). Мĕн тумалла? Концерт пулмасть тесе каламалла-и халăха? Святослава аса илтĕм çавăн чухне. Аслисенчен унăн хушаматне ыйтса пĕлтĕм те сĕтел çинче выртакан абонементсен кĕнекине уçса пăхрăм: пур унăн хушамачĕ! Шăнкăравларăм – телей кĕсьерех ларать иккен! Телефона йĕкĕт хăех тытрĕ. Çапла-капла тетĕп, аппаратура кирлĕ, атту концерт лартаймастпăр тесе ăнлантаратăп хайхине.

Кутăнлашса тăмарĕ вăл, хăш вăхăтра персе çитрĕ. Концерт хыççăн дискотекăна юлтăмăр. Ташă вăййи вĕçленсен концерт тумĕсене тултарнă пысăк пакета «çавăтса» урама тухрăм. Юнашар Святослав пырса та тăчĕ: пакет йăтса пырса пулăшрĕ, çамрăк хĕре те килне ăсатса ячĕ. Çак таранччен йĕкĕтсемпе калаçса курман эпĕ – 6-мĕш класа çӳрекен шăпкă та лăпкă хĕр пĕрчи. Тăтăмăр калаçкаласа кил умĕнче. Куçа та усрĕ вăл: хунар çутипе илемленнĕ пирĕн урам ялта чи хитрине пĕлтĕм çавăн чух – асра та пулман малтан.

Тепĕр кунне вăл киле шăнкăравларĕ, каçпа клуба тухатăн-и тесе ыйтрĕ. Эпĕ, тĕрĕс воспитани илнĕ хĕр пĕрчи, аннене йĕкĕтпе тĕл пулма тытăннине каласа патăм. Анне вара килĕшсех каймарĕ хĕрĕн савăк кăмăлĕпе: 10 çул аслăрах, таçта тĕнчере ĕçлесе çӳрет, йĕркеллĕ çын пулнă пулсан – ку таранччен авланнăччĕ. Вопшĕм: опасный тип. Святослав çав каç мана каллех ăсатса ячĕ. Кĕсье телефонĕсен номерĕсемпе те улшăнтăмăр.

«Ват пуçупа ман çумра мĕн тупнă эсĕ?» – тесе темиçе те ыйтнă Святославран. «Хам та пĕлместĕп. Сăнпа хитре эсĕ, пĕвӳ çыпăçуллă. Сирĕн çемье те лайăх, аçу-аннӳ питĕ ĕçчен. Чун туртать сан патна», – тесе хуравлатчĕ вăл. Вара: «Хăв мĕн тупнă ман çумра?» – тесе ыйтатчĕ. «Эпĕ те пĕлместĕп. Тĕлĕнсе вилсе каятăп. Хамран аслă çынна килĕштерессе усал тĕлĕкре те тĕлленмен эпĕ».

Темиçе çул çӳрерĕмĕр эпир Святославпа. Иртнине аса илсен хама халĕ те детектив романри сăнар пек туятăп. Хаваслă вăхăтсемччĕ! Атте-анне Святослава хирĕç вĕçĕ-хĕррисĕр кавар тăваççĕ, хĕрне унран сивĕтесшĕн те уйăрасшăн. Унăн кăмăлĕн начар енĕсене каласа тухаççĕ, çав начар енсем малашлăхра мĕнлерех аталанса хĕрĕн пурнăçне еплерех амантасса мал курăмлăн «тухатаççĕ». Клуба та кăларми пулчĕç мана. Эпĕ вара чăлана ăшă тумтир тухса хураттăм, атте-анне умĕнче юри футболкăпа çӳреттĕм. Кайран чăлана тухса куртка тăхăнаттăм та Святославпа тĕл пулма вĕçтереттĕм. Кĕрхи сивĕ çумăр айĕнче те çӳренĕ, çил-тăман витĕр те кĕрт ашнă: пĕрремĕш юрату! Çапла вăл. Халĕ пулсан-и? Çӳренĕ тет шăнса-йĕпенсе – кĕтсе тăр!

9-мĕш класс хыççăн эпĕ урăх шкула кайрăм. Пурнăç чуппи улшăнчĕ, хам та ӳссе çитĕнтĕм темелле. Çĕнĕ юлташсем тупăнчĕç, урăх çынсемпе паллашрăм. Манăн пĕрремĕш юрату пĕчĕк ача вăййи пек çеç туйăнма пуçларĕ. Çитменнине пĕр йĕкĕт куç хыврĕ мана. Пытармастăп – хамăн кăмăла та каятчĕ вăл. Тĕл пулма тытăнтăмăр. Тĕл пулусене питĕ вăрттăн – шпионсенчен кая мар – асăрханса ирттернĕ: Святослав ан пĕлтĕр тата! Иккĕмĕш юратупа атте-аннене те паллаштартăм. Хальхинче вĕсем нимĕн те каламарĕç: килĕшнĕ хампа пĕр çулхи йĕкĕт.

Юрату йĕп мар, çип çăмхи ăшне чиксе пытараймăн. Святослав хăлхине çитернĕ эпĕ унпа кăна мар, урăххипе те тĕл пулнине. «Санăн тулькăш манăн пулмалла. Шкул пĕтерсен мана качча тухмасан – никамăн та ан пултăр тесе секир башка тăватăп сана. Тĕрмере ларса тухатăп та ĕмĕр тăршшĕпе сан вил тăпру патне çӳрĕп. Çук-ха, малтан – сана, кайран – хама вĕлеретĕп», – тесе хăратрĕ те пăрахрĕ ăнран кайнă Святослав.

Çакăн хыççăн манăн туйăмсем юр çине тухса ывăтнă утюг пекех сивĕнме тытăнчĕç. Юлашкинчен пăрлансах ларчĕç. Атте-анне нимĕнле кавар та туман иккен: вĕсен сăмахĕсем пурте тĕрĕс – Святослав чăнах та çавнашкал, шанчăксăр йĕкĕт.

Татăклăн уйрăлма вара эпĕ шкул пĕтерсен уйрăлтăмăр. Ун чухне эпĕ 1-мĕш курсра вĕренетĕп. Çĕнĕ çула пĕрле кĕтсе илтĕмĕр. Ун хыççăн пĕр-икĕ хутчен тĕл пултăмăр та Святослава: «Тек ман пата ан кил!» – тесе каларăм. Ăнлантăм ĕнтĕ: çулĕпе те аслă, кăмăлĕпе те мана юрăхлă çын мар вăл: тем пек тăрăшсан та телейлĕ мăшăр пулас çук эпир, çемье ытарĕ пирĕн валли мар. Çавăн пек çав вăл ăса кĕрсен: пĕрремĕш юрату айванлăхĕ тӳрех курăнать.

Темиçе çул иртсе кайрĕ унтанпа. Святославпа тăшман мар эпир, курсан пĕр-пĕрне чăмăркка юнамастпăр, сывлăх сунсах калаçатпăр. «Мана качча тухмастăн апла?» – тесе яланах ыйтать вара. «Шутламастăп та!» – хуравлатăп ăна. «Асту вара: санăн туйна пыратăпах, пĕр çĕклем хĕрлĕ кĕл чечек йăтса çитетĕп. Сире телей сунса сăмах калатăп та – чечексене уру айне ывăтатăп!»

Мендельсон вальсне пĕр çĕклем хĕрлĕ кĕл чечек ашса-ватса çаврăнмалла пулать ĕнтĕ туйра. Чăтса ирттерĕпĕр – мĕн тăвăн: мăн асаннесем чухне те хĕр чухне хĕрĕх тус пулнă. Мĕн чухлĕ вăхăт иртнĕ унтанпа, самана улшăннă.

# ХАЛӐХ СУДЙИСЕНЧЕН ВӐЛ ҪЕҪ ГЕРОЙ

***1943 ҫул, авӑн уйӑхӗ. Хӗвел анӑҫнелле ҫул уҫма совет ҫарӗсен Днепр урлӑ каҫмалла. Сарлака юхан шывӑн сылтӑм ҫыранӗнче плацдарм туртса илсе ӑна анлатнӑ чух хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑ ҫар ҫыннисенчен пӗри – Совет Союзӗн Геройӗ Алексей Романович Логинов лейтенант. Ӑна ҫак чыслӑ ята вилнӗ хыҫҫӑн СССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ 1944 ҫулхи кӑрлачӑн 15-мӗшӗнче панӑ. Офицерӑн паттӑр ӗҫӗ Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫин историне кӗрсе юлнӑ. Алексей Романович ҫуралнӑранпа 110, вилнӗренпе 70 ҫул ҫитнине халалласа, унӑн кун-ҫулне пултарнӑ таран тишкерсе вулакансене паллаштарас тӗллевпе Шупашкарти архивсене, Элӗкри литературӑпа тавра курӑм музейне, Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Кушлавӑшпа Упукушкӑнь ялӗсене ҫитнӗччӗ.***



### 1. «Мӑшӑрӑн ашшӗ-амӑшӗ ҫирӗп налук тӳленӗ»

Ҫӗр-шывра граждан вӑрҫи пынӑ. Арҫынсене, ҫар ҫулне ҫитнӗ ҫамрӑксене Совет влаҫне хӳтӗлеме Хӗрлӗ Ҫар ретне тӑратнӑ. Кӑрмӑш уесне кӗрекен Штанаш салинче вырнаҫнӑ Атай вулӑсӑн кооперативӗнче курьерта ӗҫлеме вӑйпитти ҫын та юлман. Ҫак ӗҫе Упукушкӑнь ялӗнчи Роман Степанович Логинов хресченӗн ачи Элекҫи кӗнӗ. Ашшӗ хуҫалӑхӗнче ака-суха ӗҫӗнче пиҫӗхнӗ 16-ри ҫамрӑка ҫӗнӗ ӗҫ хӑратман. Икӗ ҫул вулӑс тӑрӑх лашапа ҫӳренӗ вӑл. Вырӑсла лайӑх пӗлнӗрен тата хитре ҫырма пултарнӑран ӑна вулӑс ӗҫтӑвкомӗнче ӗҫлӗ хутсене куҫаракан тунӑ. Сисӗнмесӗрех тепӗр виҫӗ ҫул та иртсе кайнӑ. Асаплӑ выҫлӑх ҫулӗсем те майӗпен хыҫа юлнӑ.

Тивӗҫӗсене вӑхӑтра тата типтерлӗ пурнӑҫлакан Алексей Романовича ӗҫлӗ хутсене йӗркелесе пыма шаннӑ. Канцелярире ҫыру ӗҫӗсемпе лараканӑн пысӑк мар шалӑвӗ тӑван ашшӗне налук тӳлеме ҫитсе пынӑ.

Ашшӗпе амӑшӗ ывӑлне ҫемье ҫавӑрма сӗннӗ. Ҫирӗм пӗр ҫулхи йӗкӗт валли вӗсем хӗр те сӑнаса хунӑ иккен. Кин пулмалли хӗр хӑйсем пекех нумай ачаллӑ Егор Васильевич Пахинов вӑтам хресчен ҫемйинчен. Вӑл ҫил арманӗ те тытнӑ пулнӑ, ҫемьи вара икӗ хутлӑ кирпӗч ҫуртра пурӑннӑ. Егор Васильевич Совет влаҫӗшӗн шанчӑклӑ «элемент» шутланман пулсан та ӑна тӳре-шар сасӑ прависӗр хӑварма ӗлкӗреймен: «кулак» ятне илтнӗ вӑтам хресчен 1921 ҫултах ҫӗре кӗнӗ, хӗрӗ качча тухиччен. Хуҫалӑх терчӗ арӑмӗпе ачисем ҫине тиеннӗ. Ҫавна май ҫураҫнӑ хӗрӗ Елен амӑшӗ килӗнче ытлашши ҫӑвар шутланман. Лутра пӳллӗ хӗр-упраҫ ӗҫчен, пӑрчӑкан пек вӑр-вар пулнӑран, Элекҫи хӑй те ӑна килӗштернӗ.

Чунӗсемпе пӗр-пӗрин патне туртӑннӑ каччӑпа хӗр мӑшӑрланнӑ. Арӑмӗ «кулак» хӗрӗ пулни пурнӑҫра чӑрмавсем кӑларса таратма пултарасса ӗненмен Алексей Романович. Пӗрремӗш пепкине ҫамрӑк мӑшӑр Мишок (хут ҫинче Михаил) ятлӑ хунӑ.

Алексей Романовичӑн ашшӗ, Роман Степанович, Хура Кӗсрери вӑрман хуҫалӑхӗнче ӗҫленӗ. Хурӑнсене кӑкласа тымарӗсенчен лаша хӑмӑчӗсем валли клешнесем хатӗрленӗ, вуллисенчен пура пуралanӑ. Ҫапла майпа хӑйне валли те пӗр пӳлӗмлӗ самай пысӑк, ывӑлне уйӑрса кӑларма та икӗ пӳлӗмлӗ шурӑ пӳрт лартнӑ.

Влаҫ тытӑмӗ ҫӗр-шывӑн хуҫалӑхне аталантарассипе пӗрлех хут пӗлменлӗхе пӗтересси чи кирлӗ ӗҫсенчен пӗри тесе палӑртнӑ. Совет влаҫӗ пӗтӗм халӑх ачисене хут вӗрентсе ҫутта кӑларма тӑрӑшнӑ. Патшалӑх ҫутӗҫ валли ҫителӗклӗ укҫатенкӗ уйӑрайманран вырӑнти органсем ҫӗнӗрен уҫӑлнӑ шкулсем валли пурлӑх никӗсне хатӗрлесе ҫирӗплетеймен. Ҫавна пулах влаҫӑн вӑтам сыпӑкри виҫесӗр ирӗклӗхпе усӑ куракан ӗҫтӑвком «кулак» тесе айӑпланӑ ҫынсен пӳрчӗсене тустарса е ахаль хресченсен ҫурчӗсене арендӑна илсе вӗренӳ класӗсене йӗркеленӗ.

Упукушкӑнь ялӗнче те тӑватӑ класлӑ пуҫламӑш шкул уҫӑлнӑ. Анчах ӑна валли ятарлӑ ҫурт пулман. Ҫав йывӑрлӑха шута илсе ял Совечӗн секретарӗ Алексей Романович хӑйӗн икӗ пӳлӗмлӗ шурӑ ҫуртне шкула арендӑна панӑ.

Республикӑра ҫӗнӗлӗхсем вӑя кӗрсе пынӑ. Районсем йӗркеленнӗ. Атай вулӑсӗ хупӑннӑ. Упукушкӑнӗнче те ял Совечӗ туса хунӑ. Ялта шкул ҫурчӗ ҫеҫ мар, вулав ҫурчӗ те пулман.

Кӗҫӗн сыпӑкри влаҫ тытӑмӗнче ҫӗнӗ суйлав иртнӗ. Алексей Романовича хресченсемпе чухӑнсем ял Совечӗн членӗ пулма суйланӑ. Хальхинче ӑна



ĕçтăвком секретарĕн пуканне шанса панипе çеç çырлахман, президиум йышне те кĕртнĕ.

Ялти шкул нушине шута илсе Алексей Романович 1928-1929 çулсенчи вĕренӳ çулĕнче ачасене хăйĕн пӳртне вĕренме кĕртет, çемьипе ашшĕ килне куçать. Унăн çемьи Хветĕк пиччĕшĕн тата Петĕрпе Иван шăллĕсен çемьисемпе пĕрле пурăнма пуçланă. Варвари аппăшĕ ку вăхăт тĕлне Кушлавăш ялне качча тухнă.

Алексей Романовича Хĕрлĕ Чутай районĕн ĕçтăвкомĕ уйăхне 12 тенкĕ тӳлесе тăма пулнă: çав шутра пӳртре тара панă икĕ пӳлĕмшĕн 6 тенкĕ, урай çуса тирпейленĕшĕн тата платник ĕçĕсене пурнăçланăшăн тата 6 тенкĕ уйăрнă. Шкул тата ял Совечĕ хăйсен мероприятийĕсене А.Р.Логинов çуртĕнче ирттернĕ. Алексей Романович та çав мероприятисем ним чăрмавсăр иртессе хăйĕн енчен шантарнă.

1929 çулта çĕр-шыв тӳпинче пĕтĕмĕшле коллективизаци ирттерме чĕнекен лозунг вĕлкĕшме тапратнă. Кăварпа шăранакан вучаха краççын сапнă евĕрех çаврăнса çитнĕ çак чĕнӳ яла. Хресченсемпе чухăнсем хушшинчи хирĕç тăру пуçланнă. Влаçăн çӳлти органĕсем ял Совечĕсене «кулаксене» тупса палăртса вĕсене «тымарĕпе кăкласа» аякка кăларса яма ирĕк панă. Ку тĕлĕшпе Упукушкăнь ĕçтăвкомĕ çемçешкелĕх (председателĕ – К.В.Васильев) кăтартнă пулин те суйлавăн иккĕмĕш созывĕнче А.Р.Логиновăн кандидатури ял Совечĕн членне тивĕçеймен. Ĕçтăвком секретарĕн пуканĕнчен ăна Урикассисемпе Упукушкăнь суйлавçисем шăвăнтарса хăварнă.

Хресченсене пысăк стройкăсене тата Çĕпĕрĕн анлă çĕрĕсене куçса кайма пулăшакан общество туса хурсан, кантурта ĕçлеме пĕлӳллĕ тата таса чунлă çын иккенне ĕнентернĕрен, А.Р.Логинов çак пĕрлешĕвĕн секретарĕ пулса тăнă. Анчах нумайлăха мар. Ку ĕçрен тухсан çулталăкран вăл районти милици уйрăмĕн канцелярине вырнаçнă. Учет тата отчет ĕçĕсене тирпейлĕ тата пĕлсе тытса пыракан ĕçчене районти шалти ĕçсен пайĕн управленийĕ Хисеп хучĕпе тата 3 метр ситцă-пусма парнелесе чысланă. Вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче тăрă шыв çине кăларнă «халăх тăшманĕсене» айăпласа ирттернĕ процессен юхăмĕ çурхи шыв пек кĕрлеме тытăннă. Юхăм витĕмĕ Хĕрлĕ Чутай салине те пырса çапнă. Çакна пулах Алексей Романович каллех ĕç вырăнне çухатнă. Ирĕксĕрех яла таврăнса çамрăк хунав евĕр вăй илсе пыракан «Жнейка» колхозăн уй-хир бригадинче колхозник пулса тыр-пулă ӳстерсе ăна пухнă çĕрте тар тăкма тивнĕ. Çĕр ĕçĕ ăна пĕртте хăратман. Çемье йышĕ те ӳснĕ.

Хĕрлĕ Чутайра А.Р.Логинов пирки манса кайман. Тасату тапхăрĕн хумĕ кăштах сӳрĕхме тапратсан районти халăх сучĕ ăна хăйĕн секретарĕ пулма чĕнсе илнĕ. Суд ларăвĕсен протоколĕсене тĕрĕс шăрçалама право пĕлĕвĕ кирлине шута илсе секретаре Шупашкара, юристсен çулталăклăх шкулне, вĕренме янă.

Юрист пĕлĕвне илнĕ ĕнерхи студента республикăри Юстицин халăх комиссариачĕ Патăрьел районĕнчи нотариус сĕтелĕн заведующийĕн ĕçĕсене йышăнма хушнă. Виçĕ ача ашшĕ çемье яваплăхне туйса, уйрăм пурăнса çемьене ним ырри пулас çуккине ăнланса хăйне Хĕрлĕ Чутай районнех яма ыйтса хут çырнă Алексей Романович. Унăн ыйтăвне комиссариат тивĕçтернĕ. Районта документсен саккунлăхне çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлекен юрист ĕçĕсен лавне туртса пыма тулли кăмăлпа кӳлĕннĕ Логинов. Тĕп ĕçĕпе пĕрлех судпа прокуратура членĕсен профсоюзĕн пуçламăш организацине те ертсе пырса районăн обществăлла пурнăçне çĕнетес ĕçе активлă хутшăннă. Юлташĕсем унăн тăрăшулăхне асăрханă, хакланă: 1939 çулхи юпа уйăхĕнче пуçтарăнмалли профсоюзсен облаçри конференцине хутшăнма делегата суйланă.

Алексей Романовича партие кĕме те сĕнеççĕ. 1939 çулхи нарăс уйăхĕнче иртнĕ ВКП(б)-ăн пуçламăш организаци членĕсен пухăвĕнче Логинов ĕçлĕхĕнчи улшăнусемпе – мĕнле сăлтавсене пула ял Совет ĕçтăвкомĕн секретарĕнчен, ĕç вăйĕсене пухакан обществăран, милици канцелярийĕнчен тухса кайнипе кăсăкланнă.

Пуху членĕсен ыйтăвĕсене, Логинов хуравĕсене протоколласа çырса пынă. Ĕçлĕхри пăтăрмахсен сăлтавне вара паттăр судьян халĕ те упранакан кĕске автобиографийĕнче çырнă йĕркесем уçса параççĕ: «Мăшăрăн ашшĕ-амăшĕ çил арманĕн хуçисем пулнă. Çав сăлтава пула вĕсен çирĕп налук тӳлесе тăма тивнĕ. Вĕсене сасăлав тивĕçлĕхĕсенчен çапах та хăтарман».

Çакă ĕнтĕ Алексей Романович пурнăçĕнче унăн сулмаклă утăмĕсене тăтăшах такăнтарса пынă чăн сăлтав! Пуçлăх таврашĕ ăна ĕç вăйĕсене пухакан обществăран ĕçленĕ чух çемйипе ялтан инçете – Çĕпĕре телей шырама туха кайманшăн та ĕçрен хăтарма именмен.

***(Вĕçĕ çитес номерте)***

**Л.Медведев, Хĕрлĕ Чутай районĕ**

# Геронтий ХУРАМАЛ: Эп малашне те туптанма ӳркенмĕп, шăранăп çулăмра та сив шывра...

*Геронтий Лукиянович Никифоров Çĕрпӳ районĕнчи Хурамал Туçа ялĕнче çуралнă. Студент чухнех сăвă çырма пуçланă. Г.С. Лебедев ячĕллĕ наци интернат лицейĕре 30 çул ĕçленĕ. «Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕ» çумĕнчи чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен секцийĕн председателĕ. 2004 çулта ăна «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» ята панă. 2006 çулта Раççей Президенчĕн грантне тивĕçнĕ. 2012 çулта «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» хисеплĕ ятпа чысланă. «Самант» тусĕсем Геронтий Лукиянович «Букварьтен илемлĕ литература патне» пултарулăх конкурсне йĕркелесе ертсе пынине ас тăваççĕ ĕнтĕ.*



## ТУЙĂМ ТĔРЛЕНЧĔКĔСЕМ

### Шанчăк хĕлхемĕ

*Пыл хурчĕ килсе савасса кĕтекен*
*чечек пек кĕтнĕччĕ эпĕ сана*

Санпа кăçал та кĕркунне тепĕр хут тĕл пуласса чунтан кĕтсе пурăнтăм. Çу кунĕсем хăвăрт иртрĕç. Çанталăк кĕр енне сулăннă май авăн уйăхĕ те çитрĕ. Çав уйăхри пĕр илемлĕ кун санпа тĕл пултăмăр. Чунтан кĕтнĕ тĕл пулу маншăн сарă кайăк çу çитнĕшĕн хĕпĕртенĕ пек савăнăçлă та телейлĕ пулмарĕ.

Эсĕ пирĕн пата кăнтăрлапа çитрĕн. Тĕл пултăмăр. Пӳлĕмре пĕр-пĕринпе калаçмасăр куç ывăтса кăна илтĕмĕр. Сăмахсăр курнăçу калаçса хутшăннинчен те йывăр пулчĕ маншăн. Эсĕ манпа сăмахлама тăхтарăн, çур сăмах та пулин каламарăн. Пĕр-пĕрне ахалех ăнлантăмăр терĕн пуль.

Çулталăк кĕтнĕ тĕл пулу çав кун манăн кăмăла тултармарĕ. Çамку çинчен усăнса аннă çӳç пайăрки витĕр пĕрре çеç пăхса илни çу иртсе кĕркунне çитнине асăрхаттарчĕ. Çапах та куçунти кĕркунне кĕр мăнтăрĕпе тулăх пулса чунунта çуркунне пуррине систерчĕ.

### Тĕл пулу

Аякран куртăм, çывăха пытăм, чуну ман пата туртăннине сисрĕм. Юнашар тăтăм, çывăхра пултăм, вĕри хум санран килнине туйрăм. Куçпа куç пултăм, хĕлхем куртăм, сана сĕртĕнме хăват тупрăм. Ална патăн, аллунтан тытрăм, савăшу авăрне санпала пĕрле путрăм.

### Ăрăмлă куç

Куçу, чăнах та, куллен тĕл пулакан çынсен куçĕ йышши мар. Вăл тĕпсĕр кӳлĕ пек. Унăн авăрне лексен путма та пултаратăн. Таса тӳпе пек кăн-кăвак куçунта пуça çавăрттаракан темле хăват пуррине куратăп. Куçу кăвар пек ялкăшать, мана çунтарса ярасла хĕлхем сирпĕтет. Куç пăвакан хĕлхем мар-ши ку?

Ăрăмлă куç ку. Унăн ăрăмĕ куçа пăвать. Çиçĕм çиçет мăшăр куçунта. Кăварлă куçă кăварлантарать чуна.

Асамлă куç тимлесе пăхнипе пуç çаврăнать. Шерпет ĕçсе çемçелнĕн туятăп хама. Шĕл кăвар куçу çунтарать чуна.

Ăрăмлă куç, тухатларăн эс мана,
Сар пикем, ыталас пуль халь сана.

### Мĕн тери хитреччĕ вăл...

Килсе кĕтĕн ăнсăртран,
Пирĕшти пек курăнатăн.
Çырла сĕнтĕн кунтăкран,
Ху та çырлан курăнатăн.

Мĕн тери хитре те чипер çамрăк хĕва. Хăйĕн яштака пĕвĕпе, çинçе пилĕкĕпе вăл çумри çулланнă юмана илĕртрĕ. Кĕреш пӳллĕ юман, илеме курнипе чăтаймасăр, ăна хăйĕн хевтине пачĕ, сивĕ çилтен, йĕпе-сапара çумăр-юртан хӳтĕлерĕ.

Юнашар ӳсекен çамрăк хăвапа çывăх туслашрĕ ара кĕнĕ юман. Пĕр чĕлхе тупрĕç вĕсем. Çумра никамах çук чухне хушшăн-хушшăн пĕр-пĕрин çумнех тĕршĕнетчĕç, анчах туйăм хыççăн каймастчĕç, хăйсене алăра тытатчĕç.

Пĕррехинче карçинкка тăвакан çамрăк каччă çырмана анчĕ, яштака та çинçе пилĕклĕ хăвана куçларĕ, ăна касма хатĕрленчĕ. Юман çакна курсан çамрăк хăва хутне кĕрсе тураттисемпе сулкалашсах шавларĕ. Каччă юман хăлаçланса шавланине хăлхана та чикмерĕ, ун çине усаллăн пăхса илчĕ те хăвана ним шелсĕр касрĕ. Çапла, çивĕч çĕçĕпе шатăрт çеç касрĕ. Пулаççĕ çав илеме асăрхаман çавнашкал чунсăр çынсем...

Хăвана касса кайнăранпа юман пĕчченлĕхе путрĕ. Çумра çитĕнме пуçланă черченкĕ хунав хăва тем чул авкаланнине те ăна илĕртмерĕ. Пĕчченлĕхрен тухас

тесе юман пĕр хушă çилпе те тавлашса пăхрĕ, анчах усси пулмарĕ, çил нимĕн чухлĕ те пулăшаймарĕ, тунсăха ирттерейсмерĕ. Кĕçех хуйха пула тĕксĕмленнĕ юмана вĕçсĕр-хĕрсĕр тунсăх пусса илчĕ. Чĕрене çиекен тунсăх çирĕп йывăç чунне витермеллипех витерчĕ, ăна пĕр канăç та памарĕ.

Вăхăт чуна сиплет теççĕ. Юманшăн вара вăхăт сиплевлĕ пулмарĕ. Вăл пĕрмаях çамрăк хăвашăн тунсăхларĕ, ăна манма пултараймарĕ. Ытла та килĕшетчĕ çулланнă юмана чипер сăнлă яштак хăва.

Çамрăк та савăк кăмăллă хăва паянхи кунччен хăр тăлăх юманăн куçĕ умĕнче. Мĕн тери хитреччĕ вăл... Халĕ ăçта-ши, хăш карçинккари хăва çумне çыхса хунă-ши ăна?

## СĂВĂСЕМ

### Кĕрхи илем

Хĕвел татах саралчĕ пулмалла –
Саратрĕ хурăн хăйĕн çи-пуçне.
Кĕр мăнтăрĕ парнелекен мула
Эпир паян илетпĕр чĕрене.

Ларaççĕ сарă ылтăн айĕнче
Уй-хир, пахча, çаран, вăрман, сăрт-ту...
Епле аван: çак сăн никĕсĕнче –
Кирек ăçта пăхсан та – юрату.

### Хĕвел пикене

Юратăва шухăшласа кăлартăм,
Шухăшласа кăлартăм халь сана:
Кĕлеткўне эп скульптор пек шăратрăм,
Вĕрсе чĕм кĕртрĕм ытарми чунна.

Сăну сан – çĕр çырли пекех илемлĕ,
Çил варкăшĕ пек çăмăл сан утту,
Эс маншăн – çўллĕ тўпери хĕлхемлĕх,
Эс маншăн – турă панă юрату!

### Эсĕ мана юратсан

Эс мана юратсан
Ăш сăмах каласан
Ман чĕрем савăнать
Çĕн çунат хушăнать,
Сан вĕри ытамна
Лекнĕ пек туйăнать.

Эс мана юратсан,
Ăш сăмах каласан
Сар хĕвел йăл кулать,
Кайăк юрă юрлать,
Икĕ чун юнашар
Вĕçнĕ пек туйăнать.

### Пулар ялан пĕрле

Кĕсье инçе сасне илсем ална,
Чун хыпарне кала часрах тусна.
Ăш çил юррипеле,
Çăл куç кĕввипеле
Пĕлтер, пикеçĕм, хăвăн шухăшна.

Шăлан ларать асамлă çеçкере,
Ун шăршине туйса тăрать чĕре.
Шăлан илемĕпе,
Чĕре хĕлхемĕпе
Çитинччĕ туйăму çитес çĕре.

Кĕсье инçе сасне илсем ална,
Кала эс çу пек çепĕç сăмахна.
Ирпе-и е çĕрле –
Пулар ялан пĕрле, –
Çапла ăнланăп эп сан шухăшна.

### Урăххине ан шыра

Миçе хутчен сана аса илмен-ши?
Миçе хутчен тĕлĕкĕмре курман.
Çўлти сенкерлĕх евĕрлĕ илемшĕн
Çуннипеле ман канăçлăх юлман.

Тавах! Эп çав тасалăхпа тасалтăм,
Шуралтăм çав сенкерлĕх чысĕпе,
Çĕн вĕçевре тĕрекленет çунатăм
Пуян чунун ян-ян йыхрвĕпе.

Эп малашне те туптанма ўркенмĕп,
Шăранăп çулăмра та сив шывра,
Эс çеç, ман умăмри хĕвел пек ĕмĕт,
Урăххине тархасшăн ан шыра.

### Пулĕ кĕрхи туй кĕреки

Шур хула хунарĕн çутинче
Вĕл те вĕл вĕçет тирек çулçи,
Лĕпĕшсем-ши сулхăн çĕр çинче
Е выртать кĕр мăнтăрĕн укçи.

Çак тенке пĕр ярăма пухсан
Пулĕччĕ, тен, селĕм шўлкеме.
Автансем çунат çапса ярсан
Туй та шилĕк картине кĕме.

Тен, савни, кĕр ылтăнĕ пире
Уйрăлма пĕлменнине кура
Хамăрăн туйри кĕрекере
Пил парасшăн çывăх вăхăтра.

Ахальтен-им сан патна утап
Халĕ эп çак çирĕп шухăшпа,
Пулĕç-тăрĕç çĕн тăхлач хăта
Ар тăван та пĕтĕм шур аппа!

### Сана шыратăп

Эс шывра пулă евĕр ишетĕн
Шурă кăпăк хумсем хушшинче.
Килĕшетĕн мана, килĕшетĕн,
Санпала çутăрах пек тĕнче.

Шăнкăр-шăнкăр сассун шăнкăравĕ
Кунĕн-çĕрĕн тăрать хăлхара,
Юррусен илĕртўллĕ янравĕ
Ăшă çил пек вĕçет таврара.

Тĕрлĕ çын хушшинче эп шыратăп
Кĕл чечек пек хитре куллуна,
Тупман чух хамран хам пит хăратăп,
Çухататăп пуль тетĕп сана.

Ĕлĕкхи тĕлĕксем ман çухалчĕç,
Эс кăна ман умра, эс кăна,
Чĕрере пурпĕрех çук-çке шанăç, –
Ăнланан-ши, чĕкеçĕм, мана.

Ик чуна тĕл пултарччĕ çиçĕм,
Пире çыхтăрччĕ вут хĕлĕхпе,
Ахаль мар, чунăмри пирĕштиçĕм,
Сан енне эп вĕçеп ĕмĕтпе.

# Чиперлĕх кĕтречĕ



***Ырă кун, ырă ир, ырă каç. Ырă пурнăç сире, хаклă пикесем тата хĕрарăмсем!***

***Эпир пурте хитре, модăллă, стиллĕ пуласшăн. Ялтăркка журналти картинкăна пăхатпăр та унта хамăра кăларнă пулсан мĕнлерех курăнăттăмăр-ши тесе шухăшлатпăр. Компьютерпа чаплăран-чаплă фотомодель туса хурасси нимĕн те мар тесе шанатпăр. Хамăрăн сăн-сăпат тата кĕлетке çитменлĕхĕсем пирки вара манатпăр. Çав çитменлĕхсем пирки тавçăрманнисем те чылай-ха пирĕн хушăмăрта. Силуэтпа килĕшӳсĕр, тĕспе шайлашусăр, мĕнлерех çĕлени сире пĕрре те хӳхĕмлетмен туммир туянни – укçана сая яни кăна. «Эпĕ чипер мар» текен комплекс та пуçланса кайма пултарать çакăн пек тумпа çӳресен.***

Сăнра е пĕвре пĕчĕк çитменлĕх курсанах мĕнлерех хуйхăратпăр эпир. Хуйăхлă шухăшсем психологи проблемине те куçса каяççĕ – ун пекки те пулкалать.

Çавăнпа пурин те пĕлмелле: хитре мар хĕрарăм çук! Чуххăмăн суйланă çи-пуç, тĕрĕс мар макияж тата прическа, тĕспе пĕлсе усă курманни вара пур. Кашни хĕр-упраç – тăрăшсан ĕнтĕ – илĕртӳллĕ сăнар, чипер сăн-пуç калăплама пултарать. Хăвăра çĕнĕрен çуратас пархатарлă ĕçре пĕрремĕш утăм – сăн-пĕве тĕрĕс хаклани, çитменлĕхсемпе лайăхлăхсене пĕлни.

Çавăнпа çак номертен тытăнса çулталăкĕпех Илемлĕх шкулĕнче вĕренĕпĕр: эсир – «Самант» вулакан пикесем, хĕрарăмсем, эпĕ – стилист-ӳнерçĕ Елена Степанова.

Кăштах хам çинчен. Мана ăннă темелле – илемлĕ çын пулса çуралман эпĕ. Хамра килĕшекенни нимĕн те çукчĕ тесе аса илмелле: сăн-пит те, кĕлетке те, пурте япăх. Ăннă тесе мĕншĕн калатăп – чăнласах пур е туйăнакан кăна çитменлĕхсене чуна ыраттарса йышăннăран хама куçкĕскире питĕ те питĕ сăнаса та тимлĕн пăхма вĕрентĕм. Тĕкĕр умĕнче сехечĕ-сехечĕпе (тен, эрни-эрнипех е уйăхĕ-уйăхĕпех те) тăнă эпĕ. Хĕрсен е

хĕрарăмсен çитменлĕхĕсемпе лайăхлăхĕсене çур çеккунтрах асăрхама хăнăхса çитрĕм. Сăн-сăпат кăнттамлăхĕсене куç тӳрех курма, сăн-пит тата кĕлетке хăй евĕрлĕхĕсене те тӳрех палăртма вĕренсен – шаржсем нимĕн те мар ӳкерме тытăнтăм. Ӳкерме е йăвалама вара эпĕ яланах юратнă, пĕлнĕ те.

Тепĕр ăнăçу – çамрăклăх Совет Союзĕ тапхăрĕ вăхăтĕнче иртнинче: модăллă та хитре тумтир лавккасенче çукччĕ, ирĕксĕрех çĕлеме вĕренме тиврĕ, пулма пултарайман, анратса яракан çи-пуç шухăшласа кăларма тытăнтăм. Кайран, декретра чух, заказпа та тумсем çĕлесе параттăмччĕ.

Юлашкинчен çапла шут тытрăм: шаржсем пачах та ӳкерместĕп (пурнăçра кăнттамлăх ахаль те нумай), «минуссене» вара «плюса» çаврма пуçăнмалла. Илемлĕхе калăплама-тума вăхăт çитрĕ. Пурнăç екки çапла килсе тухрĕ: халĕ эпĕ, харпăр пайтаçă (предприниматель) lik1.ru ятлă вĕренӳ сайтне тытса пыратăп. Чăваш Енре пурăнатăп та кăмăлăм паллă: чăваш хĕрĕсем яланах чиперрисем, хитре, стиллĕ тата пĕлсе тăхăннисем пулччăр. Çавăнпа журналта та вĕренӳ çулне уçас терĕм.

Уроксенче эпир çаксене сӳтсе явăпăр та пăхса тухăпăр:

– мĕн вăл мода тата мĕн вăл стиль;

– гармонин мĕнле саккунĕсем пур тата тумтирти курăм иллюзи мĕнпе пулăшать;

– кĕлеткесен мĕнле типĕсем (ушкăнĕсем) пур, ӳт-пӳ уйрăмлăхĕсем, хăйне евĕрлĕхĕсем;

– кĕлетке евĕрлĕхĕсене кура тумтир валли мĕнлерех пропорци, силуэт, фасон суйламалла;

– мĕн вăл колористика тата тĕссем пĕр-пĕринпе шайлашăнни-килĕшĕнни;

– тумтир пулăшнипе çитменлĕхсене мĕнле пытармалла, лайăхлăхсене вара палăртмалла;

– макияжпа усă курса чиперкке мĕнле пулса тăмалла;

– тата ытти нумай япала.

Çапла вара, мĕншĕн пире мода кирлĕ? Эпĕ, статья авторĕ Е.Степанова, МОДА ПИРЕ КИРЛĔ МАР тесен – кам манпа килĕшĕ-ши? Никам та! Апла манăн шухăш тĕрĕс мар. Йĕркипе каяр.

Тахçан авал, ĕмĕрсем каялла, мода, тĕпрен илсен, пуяннисем чухăннисенчен уйрăлса тăнине, вĕсем мĕнле обществăран пулнине кăтартнă. Хăрушла хаклă çи-пуç (кутюрсенчен), ювелир эрешĕсем туянма пултаракан çынсем паян та ыттисем умĕнче сăмса каçăртса çӳреме тăрăшаççĕ. Çав «ыттисене» çырлахтарма- ляплантарма ĕнтĕ модăна шухăшласа кăларнă та. Глянец журналти çăлтăрсем пек кăçал çавăн сарлакăш шăлавар тăхăнса çӳремелле тесе калаççĕ те пире – эпир паллах ĕненетпĕр: тăм шăхличсем мар вĕт, ăна-кăна чухлатпăр. Вара ӳт пек çыпăçса тăракан шăлавар тăхăнатпăр, вăл мĕнлерех ларнине (уйрăмах хыçалтан мĕнлерех курăннине) пысăк тĕкĕрте пăхмастпăр та, урасен форми еплерех пулни пирки асра та çук. Тен, кунашкал шăлавар тăхăнма пирĕн пач юрамасть?

Пĕлтĕр вара пире сумкапа пушмаксем пĕр тĕслĕ пулмалла тесе каларĕç. Кăçалхи модăна ĕненес пулсан, вĕсем пĕр тĕсли – нимĕн те пĕлменни-чухламанни (мода журналĕсенче моветон тесе палăртаççĕ). Эпир ĕненсе лартатпăр та пĕлтĕрхи туфлисене тĕспе юрăхлă сумка илме чупатпăр (мăшăр туфли патне улттăмĕш сумкăна илетпĕр). Трендра пулмалла – мĕнле вара унсăрăн! Сăмахĕ те модăллă: ТРЕНД.

Модельерсене, тумтир çĕлекенсемпе сутакансене çынсем çи-пуç тăтăшрах туянни питĕ интереслентерет – рынок саккунĕсене никам та пăрахăçламан, пурте тупăш нумайрах тăвасшăн. Пĕр тумтирех темиçе çул тăхăнса ан çӳреччĕр тесе ĕнтĕ çынсен яланах улшăнмалла, трендра пулмалла, модăллă та стиллĕ çӳремелле текен шухăша пуçа хываççĕ, шав çĕнĕ мода шухăшласа кăлараççĕ, ăна ӳкереççĕ, çĕлеççĕ те – вара пире сутаççĕ. Тум чăннипе кивеличчен, вăл хамăра та йăлăхтарчĕ, ăна ыттисем те курса ывăннă тесе ĕненнĕрен, эпир кивçене кĕрсех çĕнĕ çи-пуç илме чупатпăр.

Чăнах та – эпĕ кăшт ӳстеререх каларăм пуль. Хам та мĕн ачаран мĕнлерех мода пире сĕннине сăнаса пынă, тĕлĕнмелле çи-пуç та хамах çĕленĕ – урамра çаврăнаçаврăна пăхатчĕç. Вăхăт шунă май кайран ăнлантăм: модăсăр пуçне тата СТИЛЬ пур. Ăслисем те аслисем çавăнпа: «Мода каять, стиль юлать», – тесе калаççĕ ĕнтĕ.

Килес урокра çакăн çинчен калаçăпăр. Енчен те хăвăрăн сăн-пит е кĕлетке курăмлăхĕ пирки ыйту тухсан – редакцие çырăр. Кăмăл пулсан, сирĕн ыйтăва тата манăн хурава журналта та пичетлĕпĕр. Енчен те питĕ харпăр ыйту тăк – ВК пур: çырăр (адрес, http://vk.com/lik100). Манăн сайта та кĕрĕр: lik1.ru (хама мĕнлерех «хитрелетнине» те курăр унта).

Ан именĕр, çырăр! Эпĕ те сирĕн валли çырăп, ӳкерсе парса ăнлантарăп.

Чипер пулма вĕренер!

© САМАНТ

**Аслă классенче вĕренекенсемпе çамрăксен журналĕ**

*ИНДЕКС*
*73208 (республикăра)*
*11467 (республика тулашĕнче)*

**1929-1991 çулсенче «Хатĕр пул!», 2003 çулччен «Çилçунат» ятсемпе тухнă**

9 (672) № 2014 ç.

*УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:*
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.**

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан - **Г.А.МАКСИМОВ**

Яваплă редактор - **В.СТЕПАНОВ.**

Компьютер дизайнĕ - **И.МИЛОВИДОВА.**

Пирĕн сайт:
**www.hypar.ru**

Электрон адрес:
**tantas@list.ru**

Редакципе издатель адресĕ:
428019,
Шупашкар хули,
Иван Яковлев пр.,13,
Пичет çурчĕ,
«Хыпар» Издательство çурчĕ

Телефонсем:
**56-00-67**
**28-83-89**

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕ (Роскомнадзор) 2013 çулхи раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00310 № регистрациленĕ.

Хакĕ ирĕклĕ.

Журнала редакцире калăпланă, «Чувашия» ИПК» ПУП (И. Яковлев пр.,13) пичетленĕ.

Пичете алă пуснă: 18.09.2014.
Пичетленĕ: 26.09.2014.

Хут формачĕ
60х84 1\8
Усл. п. л. 2,83.
Тираж 1592 экз.
Заказ № К-1809



***Алена Иванова***

Зодиак палли – Тараса. Юратнă çеçке – кĕл чечек, тĕс – шурă. ЧПУ вырăс тата чăваш филологийĕпе журналистика факультетĕнче вĕренет. Ташлама, юрлама хавас. Тĕрлеме пултарать, бисертан мăй çаккисем, тухъясем ăсталать. Кăмăл пур чух тутлă апат-çимĕç хатĕрлет. Пурнăçра вĕççĕр-хĕрсĕр аталанма тĕллев лартнă.



17



18



***Ольга Васильева***

Зодиак палли – Рак. Юратнă чечек – шурă лили, юратнă тĕс – хура. ЧППУ физкультура факультетĕнче вĕренсе тухнă, тренер специальноçĕпе ĕçлеме хатĕр. Спортпа питĕ туслă. Апат-çимĕç хаваспах хатĕрлет. Пурнăç тĕллевĕ – çемье çавăрса харпăр хăй тĕллĕн ĕçлесе пурăнасси.